Библиотека им. М. Горького №

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Май 26
ЫТЛАРИКУН
№ 101 (9010)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. **Ф. Олангин.**—Коммунистсен пĕлĕвĕсем чылай ÿсрĕç. (2 стр.).
В. Чистопольский.—Обществăлла пурлăха тирпейлĕ сыхласа усрассишĕн (2 стр.).
С. Послов, А. Герасимов.—Автобуса юсамасăр 140 пин километр çÿретессишĕн (2 стр.).
Г. Алексеев.—«Гвардеец» колхоз опычĕпе усă курса (3 стр.).
И. Кузьмин.—Выльăх-чĕрлĕх витисене лайăх тумалла (3 стр.).
Шкулсенчи экзаменсем (3 стр.).
Районсенчи хаçатсем стена хаçачĕсем çинчен (3 стр.).
Н. Кондаков.—Пурçăн хурчĕ ĕрчетекенсен канашлăвĕ (3 стр.).
С. Щербатых.—Канада кам аллинче? (4 стр.).
Румынири ялсенчи коллективлă хуçалăхсенчи малта пыракансен пĕрремĕш съезчĕ (4 стр.).
Венăра Пĕтĕм тĕнчери врачсен конгресĕ уçăлнă (4 стр.).
Совет моракĕсем Швеци пăрахучĕсене пулăшни (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Тĕнчери хальхи лару-тăру пирки

Юлашки уйăхсенче тĕнчери тавлашуллă ыйтусене йĕркелес тĕлĕшпе тăвакан утăмсемпе пур çĕршывсенче те хытă интересленеççĕ. Хальхи условисенче, паллах, çавăн пек пулмалла та ĕнтĕ.

Пĕтĕм тĕнчери анлă ушкăнсенче тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусенчи йывăрлăха пĕчĕклетме тăрăшни ÿссе пырать. Çакна никам та тунма пултараймасть. Тавлашуллă ыйтусене татса парас çулпа малалла тунă кирек мĕнле утăм та вăрçă хăрушлăхне чакарнă пулĕччĕ, халăхсене юхăнтаракан ĕçе—васкаса хĕçпăшал туса хатĕрлес ĕçе чарса лартма пулăшнă пулĕччĕ, нумай миллионшар çынсен пурнăçне çăмăллатнă пулĕччĕ. Тĕнчери лару-тăрури йывăрлăха çаплипех хăварни вара, пачах урăхла, вăрçа хатĕрленессине малалла вăйлатнине, çар расхочĕсем малалла ÿснине, налогсем малалла ÿснине пĕлтерет. Çав налогсен йывăрлăхне чи малтан халăх массисем тÿсмелле пулать.

Çакăн пек условисенче кирек те мĕнле çĕршыв правительстви тĕнчере тăвакан кашни çĕнĕ утăма правительствăсем кăна мар, çынсен чи анлă ушкăнĕсем те тимлĕн тишкерсе вĕренеççĕ.

Совет Правительствин руководителĕсем нумаях пулмасть тĕнчери тавлашуллă е татса паман ыйтусене интересленекен çĕршывсем пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă тăрăх татса пама СССР хатĕрри çинчен пĕлтерчĕç. Çакна пысăк тимлĕхпе тата кăмăлласа кĕтсе илнине пурте пĕлеççĕ. Совет Правительствин руководителĕсем çавăн пек калани халăхсем тĕнчери чи кирлĕ проблемăсене йĕркелеме май пуррине ĕненсе тăнине çирĕплетрĕ. Мĕншĕн тесен халăхсем çакна пĕлеççĕ: Совет Правительствин заявленийĕсем нихçан та унăн чăн-чăн шухăшĕсенчен уйрăлса тăмаççĕ.

Президент Эйзенхауэр апрелĕн 16-мĕшĕнче тухса каланă чухне «тавлашуллă ыйтусенчен пĕри те—вĕсем пысăк пулсан та, пĕчĕк пулсан та,—ытти мĕнпур çĕршывсен прависене хисеплеме кăмăл тусан, татса парайми ыйту пулмасть», пĕтĕм тĕнчери тавлашуллă ыйтусене татса панă чухне «Пĕрлешÿллĕ Штатсем хăйсене тивĕçлĕ тÿпе йышăнма хатĕр» тесе каланă сăмахсене,—вăл сăмахсен ырă пĕлтерĕшне Эйзенхауэр сăмахĕнчи ытти вырăнсем пĕтерсе хунă пулин те,—мире сыхласа хăварассишĕн тăрăшакан çынсем мире юратнине пĕлтерекен паллă вырăнне хурса йышăнчĕç. Кăна та ĕнтĕ пурте пĕлеççĕ. Халĕ çакна палăртма тивет: Эйзенхауэр майăн 20-мĕшĕнче çĕнĕрен тухса каланă сăмахра мире юратнине пĕлтерекен çав паллăран йĕрри те юлман, çав сăмахсене ĕçпе çирĕплетменни çинчен каламалли те çук.

Великобритани премьер-министрĕ Черчилль нумай пулмасть общинăсен палатинче тухса каланă сăмахпа (унта хальхи вăхăтра тĕнчене интереслентерекен чылай ыйтусене хускатнă), çавăн пекех вăл сăмах пирки пулнă прениссемпе Англире кăна мар, Англирен инçетре те интересленеççĕ. Çакна ăнланмалла ĕнтĕ.

Британи премьер-министрĕ нумай енчен США правительствин позицине ырланă. Анчах та унăн сăмахĕнче чи кирлĕ ыйтусем тĕлĕшпе Великобритани позицийĕпе Пĕрлешÿллĕ Штатсен позицийĕ хушшинчи уйрăмлăхсем те палăрнă.

Черчилль хăйĕн сăмахĕнче Совет Союзĕпе çыхăну тытас ыйтусем çинчен чылай чарăнса тăнă. Ку тĕлĕшпе вăл каланине ССР Союзĕнчи общество шухăшĕ пурне те пĕр критикăсăр, хытă хирĕçлемесĕр йышăнма пултараймасть. Анчах та пирĕн шухăшсем Великобритани премьер-министрĕн шухăшĕпе мĕн енчен пĕр пек маррине кăтартса пани халĕ кирлех мар. Мире тата халăхсен хăрушсăрлăхне сыхлас тĕллевпе тĕнчери тавлашуллă ыйтусене татса памашкăн пулăшма пултаракан вырăнсене палăртни халĕ кирлĕрех.

Черчилль сăмахĕнче Англи халăхĕ миршĕн тăрăшнине палăртакан тата Великобритани премьер-министрĕ тĕнчери хальхи лару-тăрури пит кирлĕ хăшпĕр ĕссене хак панă чухне реалистла пăхнине кăтартакан положенисем пур. Мире сыхласа хăварма тăрăшакан обществăлла анлă ушкăнсем çав положенисене ырласа йышăнчĕç. Çакăнпа пĕрлех, — уйрăмах Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче,—тĕнчери лару-тăрури хальхи йывăрлăха çаплипех хăварассишĕн уйрăмах интересленекен ушкăнсем çав положенисене тиркеççĕ.

Черчилль çакăн пек каланине асăрхаттармалла: «Россия хăрушсăрлăхĕ Хĕвеланăç Европа ирĕклĕхĕпе тата хăрушсăрлăхĕпе çураçма пултарайманни çинчен калакан пысăк ыйтăва татса пама май çук тенине эпĕ ĕненместĕп», тенĕ вăл. Тĕнчери ыйтусене татса пама чăнипех тăрăшакан, вăрçа курайман çынсем çав сăмахсем çинчен ырламасăр калаçма пултараймаççĕ. Мĕншĕн тесен вăрçă, уйрăмах ку чухнехи условисенче, халăхсене питĕ пысăк инкек кÿрет.

Пирĕн çĕршывра Черчилĕн асăннă сăмахĕсем çине тимлĕ пăхаççĕ, тĕнчери хальхи лару-тăрура вăхăтра тунă утăм вырăнне хураççĕ.

Совет Союзĕпе Хĕвеланăç Европăри çĕршывсен «хăрушсăрлăхĕ килĕшÿллĕ пулма» пултарни çинчен каласа, премьер-министр, паллах, хăйĕн çĕршывĕн интересĕсене асра тытнă. Куншăн пĕрлех çакăн пирки иккĕленме кирлĕ мар: Англин наци интересĕсене мире тата тĕнчере килĕштерсе ĕçлессине çирĕплетес интерессемпе çыхăнтарас тĕллевпе тытса пыракан политикăна Совет Союзĕпе мире юратакан ытти халăхсем ăнланĕç тата ырлĕç.

Черчилль СССР хăрушсăрлăхĕпе Хĕвеланăç Европа хăрушсăрлăхĕ çураçуллă пулма пултарни çинчен калани пысăк вырăн йышăнать. Мĕншĕн тесен çак ыйтăва лартса, Великобритани премьер-министрĕ Великобританипе Совет Союзĕ хушшинче çыхăну тытас ыйтусене кăна мар, мире сыхлас тата ăна çирĕплетес пĕтĕм проблемăна та хускатать.

Ку чухнехи тĕнчери лару-тăру халĕ йĕркелеме тивĕçлĕ проблемăсем питĕ кăткăс пулнипе палăрса тăрать. Ку вăл тавлашуллă тата татса паман пĕтĕм проблемăсене пĕре тытăнсах татса пама хăтланса пăхни ахалех пулать тесе шутлакансем çине кирлĕ тимлĕхпе çаврăнса пăхма хушать. Çавăн пек часрах йĕркелесе ямалли ыйтусене мала кăларса пыни,—Корейăри вăрçă ыйтăвĕ е Германи ыйтăвĕ çавăн пек ыйтусем пулса тăраççĕ,—пĕтĕм тĕнчери хальхи лару-тăрури йывăрлăха сирсе яма, ытти проблемăсене те татса пама кирлĕ майсене хатĕрлеме пулăшнă пулĕччĕ. Черчилль хăй каланă чухне пĕтĕм тĕнчери проблемăсене йĕркелесе ярассине çавăн пек ăнланнă та пулĕ ĕнтĕ. Вăл çапла каланă: «Пурне те йĕркелесе çитериччен Советлă Российăпа нимĕн те йĕркелесе яма май çук тесе шутлани тĕрĕс пулмасть. Икĕ е виçĕ йывăр ыйтăва татса пани мире юратакан кирек мĕнле çĕршывшăн та çитĕнÿ туни пулĕччĕ».

Пĕтĕм тĕнчери чи кирлĕ ыйтусенчен пĕри вăл Корея ыйтăвĕ пулса тăрать. Ăна мирлĕ майпа йĕркелессипе мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем интересленеççĕ.

Китай Халăх Республикин тата Демократиллĕ Корея Халăх Республикин дипломатилле пуçарăвĕ,—вăл пуçарăва Совет Союзĕ ырланă,—Корейăра перемири тума тата вăрçа чарса лартма чăн-чăн майсем туса пачĕ. Çакă вăл пуриншĕн те паллă.

Килĕшÿ тунă май, тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене Корейăра улăштарса илнĕ ĕнтĕ. Апрелĕн 26-мĕшĕнче Паньмыньчжонре тыткăнри çар çыннисене пĕтĕмпех репатриацилес тĕлĕшпе калаçусем пуçланнă. Китайпа Корея енĕ панă сĕнÿсем, уйрăммăн илсен, вăл майăн 7-мĕшĕнче панă юлашки сĕнÿ, Корейăра çав ыйтăва практика тĕлĕшĕнчен татса пама, перемири тума, çапла вара вăрçа чарса лартма кирлĕ никĕс туса параççĕ.

Корейăпа Китай енĕн сĕнĕвĕсене Черчилль чăтăмлăн тата кăмăллăн пăхса тухмалла тесе каланă. Вăл çапла пĕлтернĕ: «Вĕсем килĕшÿ тумалли никĕс пулмаççĕ тесе шутлама халĕ манăн нимĕнле сăлтав та çук», тенĕ.

Черчилĕн çак заявленийĕ, çавăн пекех община палатин чылай депутачĕсем тухса калаНисем,—вĕсем Паньмыньчжонри калаçусене чăрмантаракан «ООН командованийĕн» представителĕсене хытă критикленĕ, — Корея ыйтăвне йĕркелесе ярассине тăсса пынăшăн Англире общестăн мĕнпур сийĕсем кăмăлсăр пулнине палăртаççĕ. Пхеньян çине тата Корейăри ытти хуласемпе ялсем çине, çавăн пекех Китайри хуласем, сăмахран, Аньдун тата ытти хăшпĕр хуласем çине халĕ те тискеррĕн бомбăсем пăрахнăшăн, Америка генералĕ Гаррисон Паньмыньчжонри калаçусене чарса лартма тăрăшнăшăн Англире те, ытти çĕршывсенче те тивĕçлипех тарăхаççĕ.

Нумай пулмасть Инди премьер-министрĕ Неру, Халăх палатинче тухса каласа, çакна кăтартса панă: Гаррисон позицийĕ Корейăри тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе ООН-ра иртнĕ çул вĕçĕнче йышăннă резолюцие те уççăнах хирĕç пырать, тенĕ. Неру тÿрех çапла каланă: Корейăпа Китай енĕ панă сĕнÿсем «калаçу иттермелли никĕс пулса тăмалла, проблемăна татса памалли никĕс пуласса та эпир шанса тăратпăр». Апла пулин те, Гаррисон йышăннă позицие пула, Паньмыньчжонри калаçусем çĕнĕрен йывăрлăха кĕрсе ÿкрĕç.

Çакăн пек чухне Паньмыньчжонри калаçусем пирки общинăсен палатинче лейбористсен паллă лидерĕ Эттли уççăнах кăмăлсăр пулнипе ăнланмалла та.

Черчилль сăмахĕнче Германи проблеми ыттисенчен уйрăм вырăн йышăнса тăрать. Ăна вăл тивĕçлипе «Европăри ытти ыйтусенчен чи пысăкки пулать», тенĕ. Ку вăл çавăн пек пулсан, çакăнтан акă мĕн тухса тăрать: Германи проблеми пирки Черчилль шухăшланисем унăн сăмахĕнче уйрăм пĕлтерĕш йышăнаççĕ. Анчах та Черчилль çак ыйтупа каланă шухăшсене «ыттисенчен пысăк вырăн йышăнакан» асăннă проблемăна чăнипех йĕркелесе яма тăрăшни тесе йышăнма ниепле те май çук.

Чи малтан, çак факт тĕлĕнтерет: Черчилль хăйĕн сăмахĕнче Ялтăри деклараципе Потсдамри решенисем çинчен асăнса илме те кирлĕ мар, тесе шутланă. Çав вăхăтрах вĕсене туса хатĕрлес ĕçе вăл хăй те хутшăннă. Асăннă декларацине решенисенче мире юратакан демократиллĕ государство пулса тăракан пĕрлĕхлĕ Германи туса хума, Германи ыйтăвне чăннипе йĕркелесе яма кирлĕ паха принципсене çырса хунă.

Çÿлте асăннă документсен историллĕ пĕлтерĕшĕ çакăнта пулать: вĕсенче Германи ыйтăвĕ тăрăх хĕвеланăçри державăсемпе СССР хушшинче вăрçă вăхăтĕнче тата вăрçă хыççăн калаçса татăлнă политикăна палăртса панă. Çак енчен илсен, Германие мирлĕ тата демократиллĕ государствăна пĕрлештерес тĕлĕшпе çакăнта асăннă килĕшÿсем «Россия хăрушсăрлăхне Хĕвеланăç Европа ирĕклĕхĕпе тата хăрушсăрлăхĕпе килĕшÿллĕ тăвас» ĕçре тунă пуринчен те пысăкрах çитĕнÿ пулса тăраççĕ.

Пире халĕ те çакă интереслентермесĕр тăма пултараймасть: премьер-министр тухса каланă хыççăн Великобритани тĕнчери хутшăнусем тĕлĕшпе туса иттерекен ĕçсем аслă державăсем алă пусса йышăннă тĕп принципсемпе мĕн таран çураçуллă пулма пултараççĕ тата вĕсем хушшинче тунă çĕнĕ килĕшÿсем мире тата халăхсен хăрушсăрлăхне тĕреклетес ĕçе мĕн таран пулăшма пултараççĕ.

Анчах та юлашки çулсенчи опыт çакна кăтартса парать: тавлашуллă тата татса паман ыйтусене йĕркелесе яма хĕвеланăçри державăсем килĕшÿсем тăвассине хирĕçле политика тытса пыни чăрмантарса тăрать. Çакăн пирки нимĕн те иккĕленме кирлĕ мар: ку чухнехи тĕнчери лару-тăру, аслă державăсем тĕнчери пысăк ыйтусем тăрăх йышăннă килĕшÿсене пурнăçа кĕртнĕ пулсан, хальхи пек çивĕч пулман пулĕччĕ, йывăрланса çитмен пулĕччĕ.

Çакна май çакăн çинчен чарăнса тăмасăр та иртме çук: Черчилль темĕншĕн 1925 çулта Локарнăра тунă договор çинчен аса илни вырăнлă, тесе шутланă. Унăн сăмахĕ тăрăх, çак договора çакнашкал «хăсат положени» тăрăх тунă: Германи Франци çине тапăнас пулсан, Англи французсем майлă пулать, Франци Германи çине тапăнас пулсан, Англи нимĕçсем майлă пулать. Анчах, çав вăхăтрах, Черчилль Локарно системи хăй вăхăтĕнче агрессиллĕ Германи милитаризмне пуç çĕкleме май пани çинчен нимĕн те шарламасть. Çак система вăл Германи аллине Хĕвеланăçĕнче çыхса тăнă вăхăтрах, унăн аллине Хĕвелтухăçĕнче ирĕк панă. Германи агрессине ССР Союзне хирĕçле çулпа илсе пынă. Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, Локарно политики вăл—иккĕмĕш тĕнче вăрçине хатĕрленĕ факторсем хушшинче пĕчĕк фактор пулман.

Истори опычĕ çакна кăтартса парать: Германире милитаристла, реваншистла элементсене ирĕк панă чухне, Германие мирлĕ никĕс çинче аталанса пыма май паракан тивĕçлĕ ĕçсем туса иттермен чухне Германи милитаризмĕ чылай хăвăрт ура çине тăма пултарать, ячĕшĕн тунă нимĕнле гарантисем те обязательствăсем те Германи государствипе кÿршĕллĕ çĕршывсене хăйсен хăрушсăрлăхĕ пирки шанса тăма, вĕсене Германи агрессийĕ текех хăратса тăмасть, тесе шанса тăма май памаççĕ.

Çакна та палăртни кирлĕ: Великобританин хăйĕн хăрушсăрлăхĕн интересĕсем енчен илсен, Европăри ытти çĕршывсен, чи малтан, Германи кÿршисен — Франци, Бельги, Голланди, Польша, Чехословаки тата ытти çĕршывсен хăрушсăрлăх интересĕсем çинчен каламасан та, Локарно планĕ ытла та шанăçсăр ĕç пулать. Локарно планĕ патне каялла таврăнма хăтланни вăл тĕнчери лару-тăрура пĕр çĕршывсем тепĕр çĕршывсене хирĕç тĕрлĕ йышши килĕшÿсемпе ушкăнсем тума анлă çул уçса панă пулĕччĕ. Çакăн пек пулса тăни вăл тĕнчери ĕçсене çăмăллатасси патне мар, йывăрлатасси патне кăна илсе пыма пултарать.

Кунсăр пуçне Локарно идейине ку чухнехи Германи тĕлĕшпе мĕнле майпа пурнăçлама пултăр-ха? Локарно идеи çинчен каланă вăхăтрах, Черчилль Германи пĕрлĕхне туса хурасси çинчен пĕр сăмах та асăнмарĕ вĕт. Германи пĕрлĕхне туса хурасси вăл Германишĕн хăйĕншĕн кăна мар, тата Европăра, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчере те хăрушсăрлăх туса хурас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Бонн тата Париж договорĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе хальхи вăхăтра туса иттерекен хăрах енлĕ ĕçсем çинчен систерсе, вăл Англи правительствин Германие пайлантарас тĕлĕшпе тытса пыракан политики çинчен калать. Тата та ытларах, Черчилль сăмахĕнчен çакă тухса тăрать: вăл Германие пайласа пĕтерни пулса тăнă факт, тесе шутлать çеç мар, тата çак пулса тăнă ĕçе килĕшмелле ĕç, тесе шутлать.

Пирĕн правительствăн политики, тенĕ Черчилль, Хĕвеланăç Германипе тунă килĕшÿсен шухăшне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçласа пырасси пулать. «Эпир,—тенĕ вăл малалла, — Хĕвеланăç Германи тĕлĕшпе хамăр илнĕ обязательствăсене ниепле те пăрахăçа кăларма шутламастпăр». Çакăнта каланисем вĕсем: пĕрлĕхлĕ, мирлĕ, демократиллĕ Германи туса хурас тĕллевпе аслă державăсем хушшинче тунă килĕшÿсене хăрах енлĕ майпа тунă килĕшÿсене пăхăнтарас тенине пĕлтермеççĕ-и? Çак хăрах енлĕ килĕшÿсем вĕсем Германи пайланса тăрассине çаплипех хăвараççĕ, Хĕвеланăç Германие ремилитаризацилеме май пама параççĕ, Германин çак пайĕнчен милитаризмпа агрессиллĕ реваншизм вучахĕ туса хураççĕ.

Германи ыйтăвĕ çивĕчленсе çитни совет политикинчен килет, тесе Черчилль тĕрĕс мар калани çинче чарăнса тăмастпăр эпир. Германире пулса тăнă ĕçсен чăн-чăн сăлтавĕ пирки Совет Союзĕн авторитетлă представителĕсем пĕр хут çеç мар ăнлантарса панă, çавăнпа та вĕсем çинчен кунта тепĕр хут каласа тăма кирлĕ мар. Эпир кунта Черчилль Хĕвелтухăç Германири ĕçсене тÿнтер енчен илсе кăтартас тĕлĕшпе юри çирĕп сăмахсем суйласа илсе каланине те айккине тăратса хăваратпăр. Эпир Хĕвеланăç Германири ĕçсене хак парас тĕлĕшпе унтан та çивĕчрех сăмахсем тупма кăна мар, тата чылай тĕрĕсрех сăмахсем те тупма пултарăттăмăр. Анчах халĕ сăмах пĕр-пĕринпе ятлаçасси çинчен пымасть.

Пуриншĕн те çакă паллă пулмалла: Германие темиçе пая уйăрни вăл Европа варринче тепĕр хут вăрçă хăрушлăхĕн вучахне туса хуни пулать. Германи халăхĕ хăй пĕр ĕмĕр хушши каярах пĕтĕм вăя хурса ĕçленипе тата пысăк çухатусем тÿснипе туса хунă пĕрлĕхе çухатасшăн пулас çук. Çавăнпа та Германи тĕлĕшпе тăракан тĕп задачă вăл — Германи государстви хальхи пек пайланса тăнине пĕтересси, Германипе тума мирлĕ договор хатĕрлесси тата ăна тăвасси пулать. Çак договор, аслă державăсем Потсдамра тунă килĕшĕвĕн тĕп принципĕсем тăрăх, пĕрлĕхлĕ, демократиллĕ, мирлĕ Германи туса хума май памалла.

Çав вăхăтрах, Германи агрессийĕнчен пĕр хут çеç мар хĕн-хур курнă çĕршывсен тĕп ĕçĕ вăл—Германи милитаризмне тепĕр хут вăй илме памалла мар тăвасси пулать. Çакăнпа пĕрлех нимĕç халăхне Германире мирлĕ промышленноçа аталантарса пыма, хăйĕн производствăлла-техникăлла шайне кура тĕнчери экономика пурнăçне хутшăнма, хăйĕн пуян нациллĕ культурине малалла байлатса пыма кирлĕ мĕнпур условисене туса памалла.

Ку енчен илсен, çĕнĕ мирлĕ договор тунă чухне Версаль системинче пулнă йăнăшсене текех туни пулмалла мар, аслă нацие пусмăра кĕртсе ÿкерни пулмалла мар. Никамшăн та вăрттăн ĕç мар ĕнтĕ, Версаль системине туса хуракан авторсем Германи милитаризмне пĕтерсе хурассишĕн мар, пуринчен ытла Германи тĕнчери рынокра конкурент пулнине пĕтерсе хумалла тăвассишĕн тăрăшнă.

Германие пĕрлештересси çинчен, унпа мирлĕ договор тăвасси çинчен тăракан пысăк ыйтусем патĕнчен пăрăнса иртсе, Англи правительстви Хĕвеланăç Германи тĕлĕшпе хăрах енлĕ йышăннă обязательствăсене пурнăçлама хатĕр тăни çинчен каласа, Черчилль хăйĕн сăмахĕнче тĕнчери хальхи хирĕçÿсене йĕркелесе яма чăннипе тăрăшнине курасшăн пулнă çынсене те иккĕлентерсе ÿкерчĕ.

Хăйĕн сăмахĕнче Черчилль, çавăн пекех тата, Англипе Совет Союзĕ хушшинче Лондонра 1942 çулта Германи агрессине çĕнĕрен аталанма парас мар тĕллевпе пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договор пурри çинчен те пачах асăнмарĕ. Çав вăхăтрах çак договора СССР хăрушсăрлăхне те, Англи хăрушсăрлăхне те тĕреклетме тунă. Вăл договор Германи ыйтăвĕ тăрăх ытти документсемпе, вăл шутра Потсдамра йышăннă килĕшÿпе, питĕ çураçуллă пулса тăрать.

Хăйĕн сăмахĕнче Черчилль Австри çинчен тăракан ыйтăва хускатрĕ, Австрипе государство договорĕ туни те тĕнчери хальхи лару-тăрăва чылай çăмăллатма пулăшнă пулĕччĕ, терĕ. Çакна май акă мĕне палăртса хăварни кирлĕ: Австри договорĕ çинчен тăракан ыйтăва татса парасси нумай вăхăта пынăшăн США, Великобритани тата Франци правительствисем пĕтĕмпех ответлă. Вĕсем ку тĕлĕшпе иккĕленсе пычĕç çеç мар, тата малтан тăватă держава хушшинче калаçса татăлнă позицирен те каялла чакрĕç.

Ĕç акă мĕн патне çитсе тăчĕ: нумай вăхăт хушши сÿтсе явнă хыççăн тăватă держава хушшинче пĕтĕмпе тенĕ пекех калаçса татăлсан, хĕвеланăçри виçĕ державă Австрипе тумалли государство договорĕн текстне пăрахăçа кăлармалла турĕç. Вĕсем çак килĕштерсе тунă договор текстне хирĕç хăйсен «кĕскетнĕ договорне» кăларса тăратрĕç», вăл, ССР Союзне хутшăнтармасăр çырса хатĕрленĕскер, Совет Союзĕн прависене, çавăн пекех Австри халăхĕн демократилле прависене сĕмсĕррĕн пăсать.

Çаксем пурте Австрипе государство договорĕ тумалли çул çинчи чăрмавсене сирсе пăрахасси камран килнине кăтартса тăраççĕ.

Общинăсен палатинче пулнă пренире чылай депутатсем Британи премьер-министрĕн докладĕнче Китай çинчен нимĕн те каламаннине кăтартса панă. Çавăн пек асăрхаттарса калама сăлтавĕ пулнă.

Китай халăхĕ çĕнĕ пурнăç тумалли анлă çул çине тăни пĕтĕм тĕнчери лару-тăру чылай улшăннине пĕлтерчĕ. Паллах ĕнтĕ, Британи премьер-министрĕ çавна асăрхамасăр тăма пултарайман. Ку хутра Черчилль Китай ыйтăвĕ пирки каламан пулин те, лейбористсен лидерĕ Эттли общинăсен палатинче аслă Китай халăхĕн законлă прависемпе интересĕсене шута хумасăр тăма юрамасть, тесе астутарнă.

«Китай,—тесе каланă Эттли, — Хăрушсăрлăх Советĕнче хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнмалла. Вăл чылай хăватлă держава пулса пырать пулас, унăн Пысăк пятеркăн пĕр членĕ пулма право пур».

Çакăн пек калани, паллах ĕнтĕ, Эттли коммунизма кăмăлланинчен килмен. Вăл коммунизма кăмăллать тесе, Маккарти çеç калама пултарнă пулас. Эттли Китай пирки çавăн пек калани Англин экономикăлла интересĕсенчен тухса тăрать, экономикăлла интерессем, пурте пĕлеççĕ, политикăлла интересsen никĕсĕ пулса тăраççĕ. Китайпа йĕркеллĕ хутшăну туни Англие мĕншĕн кирлине Эттли тивĕçлипе ăнлантарса парать. Вăл çакна палăртать: США-па суту-илÿ тăвасси сарăлса пырĕ тесе Англи шанса тăни чылай кăткăс ыйту пулать, суту-илÿ чакса кайнинчен пулнă сиене США «пулăшăвĕ» витме пултараймасть. «Суту-илÿ кирлĕ, пулăшу мар»—акă мĕнле позицие хÿтĕлет Эттли. Англин, Англин çеç те мар, тĕп интересĕсене асра тытсан, Эттли позицийĕ тĕрĕссине йышăнмасăр тăма çук. Океан леш енчи союзниксем тĕлĕшпе Эттли питĕ хытă ÿпкелешет: «Китайпа суту-илÿ тумалла мар тесе, вăрçă хатĕрĕсен яхăнче те пыман таварсемпе суту-илÿ тумалла мар тесе, пире пĕрмаях хĕтĕртеççĕ. Çак Китай ыйтăвне йĕркелени пирĕншĕн, ытти кирек хăш çĕршывшăн кирлĕ пулнă пекех, питĕ кирлĕ».

Тепĕр паллă лейборист, — Бивен, лейбористсен партинчи шалти оппозицие ертсе пыраканскер, нумай пулмасть каланинче Китайпа çыхăну тытас ыйтăва хăвăртрах татса памаллине тата ытларах палăртнă.

Хĕвеланăçри хăшпĕр государство деятелĕсем, хăйсем коммунизма курайманнипе, колонисенчи тата çурмаколонисенчи халăхсен наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан движенийĕсем пурте «Мускав хушнипе» пулаççĕ, тесе шутлаççĕ. Тен, Черчилль коммунизма курайманни енĕпе вĕсенчен кая юлмасть пулĕ. Анчах вăл, хăй каланинчен курăннă тăрăх, çав туйăма ирĕк паман. Çакă ĕнтĕ вăл çапла каланинчен те курăнать: «Манăн çакна калас пулать: май шутпа,—эпĕ хамăн шухăша каласа пама хăюлăх тупатăп, — Вьетмин çарĕсем е вĕсен фуражир отрячĕсем сасартăк Сиам чиккисем патне куçса пынинчен пирĕн: ку вăл Советсем пуçарнипе пулнă ĕç, тесе вывод тумалла мар».

Азири е çĕр чăмăрĕн ытти хăш те пулин пайĕнчи пĕрмаях вăйланса пыракан нацилле тата нацилле-ирĕклĕх движенийĕсен сăлтавĕсене хакланă чухне Хĕвеланăçри государство деятелĕсем чăн фактсене мĕн чухлĕ ытларах шута илĕç, вара «Хĕвеланăç» тата «Хĕвелтухăç» пĕр-пĕрне тĕрĕс ăнланас шанчăк ытларах пулĕ, ĕç вырăнсăр йывăрланассинчен тата юн юхтарассинчен хăтăлмалли шанчăк ытларах пулĕ.

Çакна палăртас пулать: Черчилль тĕнчери лару-тăрури калаçса татăлман ыйтусене мирлĕ йĕркепе татса пани кирли çинчен пĕтĕмĕшле сăмахсем каланипех чарăнмарĕ, вăл ку тĕлĕшпе буржуалла государствăсен ытти хăшпĕр руководителĕсем пек пулмарĕ. Вăл тĕнчери лару-тăрури татса пама вăхăт çитнĕ ыйтусене пăхса тухмалли майсем çинчен конструктивлă сĕнÿсем пачĕ.

Черчилль çапла каларĕ: «ертсе пыракан державăсен аслă представителĕсен конференцийĕ вăхăта нумая тăсмасăр пулмалла. Çак конференцие май килнĕ таран сахал державăсемпе çынсем хутшăнмалла. Ку тĕлпулу официальнăй мар йĕркепе пулса иртмелле, вăл пуринчен ытла хупă, вăрттăн пулмалла».

Курăнать ĕнтĕ, Черчилль, Хĕвеланăçĕнчи ытти хăшпĕр государство деятелĕсем пек пулмасăр, хăй канашлу пухасси пирки панă сĕнĕве канашлăва хутшăнакан ку е тепĕр енче тăракан çĕршывсем малтанах мĕнле те пулин обязательствăсем йышăнассипе çыхăнтармасть.

Тĕнчери хутшăнусем тĕлĕшпе нумай çул хушши пухнă пуян опыт Черчиле йăнăш тăвассинчен, мирлĕ лару-тăрура пĕр çĕршывсем тепĕр çĕршыва, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ пек çĕршыва, тĕнчери тавлашуллă ыйтусем тĕлĕшпе малтанах условисем йышăнмашкăн хушма пултараççĕ, тесе йăнăш шухăшлассинчен хăтарать пулмалла. Калаçу иттермелли условисене малтанах йышăнтарни е вăрçă вăхăтĕнче пулма пултарать—çĕнтерекен çĕршыв паракнă çĕршыва хушать. Е ун пек туни вăйсем тан мар чухне пулать—вăйлăрах енĕ вăйсăртарах енне çаратса пуяс тесе, ăна вăрçăпа хăратса, хăй хатĕрленĕ «мирлĕ» условисене йышăнма хушать.

Уинстон Черчилль панă сĕнÿ паха пулнине палăртмасăр тăма çук. Вăл çав сĕнĕве нумай пулмасть иртнĕ вăхăтра государствăсен ертсе пыракан деятелĕсем пĕрле пухăнса канашланă опыта асра тытса панă пулмалла. Нумай çĕршывсенче çав сĕнĕве ырласа калаççĕ, ку вăл асăннă сĕнÿ паха пулнине çирĕплетсе кăтартать.

Çапла ĕнтĕ, Черчилль сăмахĕнче хăшпĕр тĕп ыйтусене те пулин татса пама, çак майпа тĕнчери лару-тăру çивĕчленсе кайнине чакарма чĕнни хальхи лару-тăрура питĕ вырăнлă.

Майăн 13-мĕшĕнче США государство департаменчĕ Британи премьер-министрĕн сăмахĕ пирки пĕлтерни пичетленсе тухнă, президент Эйзенхауэр çав пĕлтерÿ текстне ырлатăп, тесе пĕлтернĕ.

Госдепартамент пĕлтернинче Черчилль сĕннĕ пек канашлу—государство деятелĕсен пĕчĕк ушкăнĕн канашлăвне иртерессине хирĕçлемен. Анчах каллех малтанхи условисем çинчен калакан паллă идейăна кăларса тăратнă, çав малтанхи условисене темшĕн вара Совет Союзĕ умне çеç кăларса тăратассĕ. Паньмыньчжонри калаçусем ăнăçлă пулĕччĕр тесе тата Австрипе договор тăвас ыйтăва татса пама ССР Союзĕн татах мĕн те пулин тумалла, теççĕ. Анчах халиччен пулнă ĕçсем çав икĕ ыйтăва татса парасси Совет Союзĕнчен мар, Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Англирен килнине уççăн кăтартса пачĕç, вĕсем ку ыйтусене татса пама хăйсем мĕн тумаллине туман-ха.

Пичетре çырнинчен, çавăн пекех тата США госдепартаменчĕ пĕлтернинчен те, Черчилль позицине, Англири политикăлла партисен паллă деятелĕсем ырланă позицие, Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи ответлă çынсен паллă ушкăнĕсем «ырламасăр» е тата «сиввĕн» йышăнни курăнать. Англири тата США-ри государство деятелĕсем ĕссем çине ăраснарах пăхни, тен, çав çĕршывсем хушшинчи экономикăлла хирĕçÿсем ытларах та ытларах палăрса пынинчен килет пулĕ. Çав экономикăлла хирĕçÿсем Пĕрлешÿллĕ Штатсем Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсен суту-илĕвне чакарас çулпа пынипе çыхăнса тăраççĕ.

ССР Союзне илес пулсан, совет общественноçĕ, Черчилĕн маларах асăннă хăшпĕр конкретлă положенийĕсене ырламасть пулин те, Черчилль сăмахĕнчи хăшпĕр конструктивлă шухăшсене интересленсе кĕтсе илчĕ. Çав шухăшсем Англин Черчилль ертсе пыракан правительствин чăн-чăн шухăшĕсене мĕн чухлĕ палăртни малашне курăнĕ.

Халех ĕнтĕ совет çыннисене тата тĕнчери миршĕн тăракан ушкăнсене ку тĕлĕшпе сыхă пулма хушакан паллăсем курăнма пуçларĕç. Виçĕ держава—США, Англи тата Франци правительствисен пуçлăхĕсен тĕлпулăвĕ пуласси çинчен сăмах пырать. Çав тĕлпулăва аслă державăсен калаçăвĕнче пĕрле тытса пымалли çула тата пĕр-пĕринпе килĕштернĕ позицие палăртса хума пухаççĕ, теççĕ. Апла пулсан, ку вăл Хĕвеланăçри державăсем малашне те, пĕр кавар туса, ССР Союзне сиен кÿме шутланине пĕлтерет.

Çав вăхăтрах ку вăл Черчилль хăй «аслă представительсен канашлăвне» пухма сĕннинчен каялла чакнине пĕлтерет, мĕншĕн тесен çавăн пек канашлу, унта ССР Союзĕ хутшăнасси çинчен сăмах пынă май, канашлăва пухăнакан енĕсем малтанах çырса хунă требованисем пулмасан кăна пухăнма пултарать. Виçĕ держава пуçлăхĕсен тĕлпулăвне вара Совет Союзĕ умне кăларса тăратмалли çавăн пек требованисене хатĕрлеме пухасшăн пулмалла.

Кунпа пĕрлех, виçĕ держава тĕлпулăвне иттерме шутлани кивĕ, тĕрĕс мар çулпа, государствăсене, вĕсен идеологине тата социаллă-политикăлла стройне кура, пĕр-пĕрне хирĕç тăратмалли çулпа малалла пынине пĕлтерет.

Паллах ĕнтĕ, Хĕвеланăçĕнчи державăсем çĕнĕрен кавар туни хальхи вăхăтра тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатма пулăшмасть, пĕтĕмпех урăхла, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусене тата ытларах йывăрлатма пултарать.

Çакă уççăнах курăнать: уйрăм государствăсен социаллă системи ăрасна пулин те, çав государствăсенчи халăхсен пурнăçри чылай ыйтăвĕсем пĕр пек пулаççĕ. Çавăн пек ыйтусен шутне, чи малтан мир тăвасси тата халăхсем суту-илÿпе экономика енĕпе, культура енĕпе килĕштерсе ĕçлесси кĕрет.

Мирлĕ самана пулмалла тăвас, государствăсем хушшинчи экономикăлла тата культурăлла çыхăнусене май килнĕ таран ытларах сарса пырас тесе панă кирек мĕнле сĕнÿсене те тĕплĕн, ырă кăмăлпа пăхса тухма Совет Союзĕ яланах хатĕр.

(«ПРАВДА» хаçатăн 1953 çулхи майăн 24-мĕшĕнчи умстатьи).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен пĕлĕвĕ нумай ӳсрĕ

«Сталинская гвардия» колхозри пуçламăш парторганизаци коммунистсемпе партире тăман активăн идейăлла-политикăлла пĕлĕвне хăпартас тĕлĕшпе кăçал нумай тăрăшрĕ. Коммунистсене пурне те парти вĕрентĕвне хутшăнтарнă.

Коммунистсемпе партире тăман актив Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене, СССР Верховнăй Совечĕн IV-мĕш сессийĕ йышăннă постановленисемпе законсене, И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генийлĕ произведенине тата И. В. Сталин юлташа пытарнă чухне пулнă хурлăхлă митингра Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем каланă сăмахсене тĕплĕн вĕренчĕç.

Çак кунсенче кружокра итоглă занятисем пулса иртрĕç. Кружок программăна пурнăçланă, вĕренекенсем материала лайăх ăнланнă. Вĕренекенсем пурте тенĕ пекех занятисене йĕркеллĕ çӳренĕ. Пĕтĕмпе 29 заняти пулса иртнĕ.

Пропагандист А. Черкасова юлташ занятисене лайăх хатĕрленсе ирттернĕ, нагляднăй пособисемпе усă курнă. Çавна май вĕренекенсем çителĕклĕ пĕлӳ илме пултарнă. Пропагандист ĕçĕ çăмăл мар, вăл ответлă та пысăк ĕç тăвать. Занятисем лайăх иртесси, вĕренӳ пахалăхĕ пысăк пуласси пропагандистран килет. Вĕренекенсем программăри материала тарăнрах ăнланса илччĕр тесе, унăн уйрăмах хытă тăрăшмалла. Кунпа пĕрлех, вĕренекенсене кĕнекепе харпăр хăй тĕллĕн ĕçлеме, вулани çинчен кĕске конспектсем çырса, унпа усă курма хăнăхтармалла. Теорилле тĕп ыйтусене пурнăçран илнĕ тĕслĕхсемпе, фактсемпе çыхăнтарса ăнлантарса памă вĕрентмелле. Çапла ĕçлесе пынă та ĕнтĕ А. Черкасова юлташ.

Итоглă занятисем юлташла калаçу формипе пулса иртрĕç, вĕренекенсем кашни ыйту çине тĕрĕс ответсем пачĕç, пурте активлăн тухса калаçрĕç. Пĕри ыйтăва çителĕксĕр çутатса парсан, тепри хушса каларĕ.

Итоглă занятисем вĕренекенсемшĕн ответлă тапхăр пулса тăрассĕ. Вĕсем пропагандист тата вĕренекенсем вĕренӳ çулĕнче мĕнле ĕçленине лайăх кăтартса параççĕ, вĕренекенсен пĕлĕвĕсене татах та тарăнрах çирĕплетеççĕ.

Итоглă занятисене ирттерме «Сталинская гвардия» колхозри парторганизаци тĕплĕн хатĕрленчĕ. Вĕренекенсене пулăшма ятарласа консультаци организациленĕ. Консультаци ирттерме Ишекри вăтам шкулти учительсене те явăçтарнă. Вĕренекенсене ялти библиотека, клуб пысăк пулăшу парса пычĕç. Вĕренекенсем валли партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем тăрăх 6 лекци тата И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генийлĕ произведенийĕ тăрăх 4 лекци ирттернĕ.

Итоглă занятисене ирттерме малтанах хатĕрленме тытăнни усăллă пулчĕ. Занятире кашни вĕренекен активлă тухса каларĕ. Ф. Абрамов, Ф. Константинов, Н. Одеряков, И. Толбаев, П. Иванов юлташсем пур темăсене те ыттисенчен лайăхрах пĕлни палăрчĕ. Ф. Абрамов юлташ И. В. Сталин юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче каланă сăмах çинчен, Ленинпа Сталин юлташсем Коммунистсен партине туса хурассишĕн, пирĕн Тăван çĕршывра социализм тăвассишĕн мĕнле кĕрешни çинчен те каласа пачĕ.

«Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăх ялхуçалăх умне кăларса тăратнă задачăсем» ятлă темăпа каланă чухне И. Толбаев юлташ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăхĕ умне кăларса тăратнă задачăсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен чăрăнса тăрса, фактсемпе ăнлантарса пачĕ.

— Партин çĕнĕ Уставĕн паха уйрăмлăхĕсенчен пĕри вăл демократиллĕ централизма—партин организацилле тытăмĕн ертсе пыракан принципне вĕçне çитичченех пурнăçлани пулать. Çĕнĕ Устав партин шалти демократине малалла сарса пыма, парти массисен активлăхне, пултарулăхне ӳстерме май парать,—терĕ Н. Петров коммунист партин çĕнĕ Уставĕ çинчен каланă чухне. Вăл вырăнти коммунистсем партин çĕнĕ Уставне мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен тĕслĕхсемпе çирĕплетсе кăтартса пачĕ.

— Партин XIX-мĕш съезчĕ пирĕн çĕршывăн производительнăй вăйĕсене аталантармалли чаплă программăна палăртса хучĕ. Съезд панă директивăсенче çĕнĕ пилĕк çуллăх планăн тĕп задачисене кăтартса панă. Çав план тăрăх промышленноçа, транспорта, социализмла ялхуçалăхне питĕ вăйлă аталантарма, совет халăхĕн материальнăй пурнăçĕпе культурăллă шайне ӳстерме палăртнă, — терĕ Н. Одеряков юлташ.

Вĕренекенсем пропагандист панă кашни ыйтăвах пур енчен те тĕплĕн сӳтсе яваççĕ. Вĕсен калаçăвĕсенче уйрăмах çакă паха: пĕр-пĕр ыйту тăрăх тухса калаçнă хыççăн юлашкинчен тĕрĕс пĕтĕçтерӳсем тăваççĕ, каланисене фактсемпе çирĕплетсе параççĕ, колхозăн паянхи пурнăçĕпе çыхăнтараççĕ.

Вĕренекенсем кĕнекесемпе хаçат-журналсене те юратса вулаççĕ. Пурте хаçат-журналсем çырăнса илеççĕ. 4-мĕш уйхир бригадинчи колхозник А. Прохоров юлташ юлашки вăхăтра «Ровно патĕнче», «Икĕ капитан», «Чăн-чăн этем çинчен çырнă повесть», «Эпир—совет çыннисем», «Абай» ятлă кĕнекесем вуласа тухнă. Вăл «Коммунизм ялавĕ» тата «Правда» хаçатсем çырăнса илет.

А. Прохоров юлташ бригадăри чи активлă агитаторсенчен пĕри. Вăл бригадăри боевой листок редакторĕ. Вăл коммунист тăрăшнипе çураки вăхăтĕнче 7 номер боевой листок кăларнă.

Коммунистсен политикăлла тата производствăлла активлăхĕ чылай ӳсрĕ. Вĕсем колхозниксем хушшинче калаçусем, докладсем ирттереççĕ, вĕсене ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшаççĕ, хăйсем те колхоз производствинче хастарлăн ĕçлеççĕ. Çавна пула ĕнтĕ колхоз çураки планне кĕске срокра, агротехникăна пăхăнса пурнăçларĕ.

Ф. ОЛАНГИН.

Ишлей районĕ.

Итоглă занятисем йĕркеллĕ иртрĕç

КРАСНОАРМЕЙСКИ. «Путь Ленина» колхозри пуçламăш парторганизаци çумĕнчи парти историпе марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх вĕренмелли кружок хăйĕн ĕçне ăнăçлă вĕçлерĕ. Кружокра коммунистсемпе партире тăманнисем 13 çын вĕреннĕ, занятисем йĕркеллĕ пулса пычĕç. Пропагандист А. Гурьев вĕренекенсене программăри материала тĕплĕн, нагляднăй пособисемпе тата вырăнти фактсемпе усă курса, ăнлантарса панă.

Вĕренекенсем материала аван ăнланнине çак кунсенче пулса иртнĕ итоглă занятисем лайăх кăтартса пачĕç. Пĕтĕмпе кунта 3 итоглă заняти туса ирттернĕ, кашни занятире 5—6 ыйту сӳтсе явнă. Юлашки хут пулса иртнĕ итоглă занятире 5 ыйту сӳтсе яврĕç. Кашни ыйту тăрăх 4—5 вĕренекен тухса каласрĕ. Вĕсем ыйту çине тĕплĕ ответсем пачĕç, хăйсен отвечĕсене республикăри, районти, колхозри примерсемпе çыхăнтарчĕç. Вĕренекенсем каласа пĕтерсен, пропагандист кашни ыйтăвах пĕтĕçтерсе пачĕ.

Юлашкинчен пропагандист А. Гурьев «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ—совет халăхне çул кăтартса ертсе пыракан парти» темăпа калаçу ирттерчĕ, çуллахи вăхăтра ялти актив умĕнче тăракан задачăсем çинчен каласа пачĕ.

Итоглă занятире уйрăммăнах И. Федоров, В. Романов, А. Никитина, П. Иванова вĕренекенсем материала ăнланни палăрчĕ.

Кружокра вĕреннĕ юлташсем хăйсен пĕлĕвĕпе практикăра усă курассĕ. Колхозниксем хушшинче час-часах калаçусем ирттереççĕ, вĕсене колхоз умĕнче тăракан задачăсене срокчен пурнăçлама мобилизациленĕ.

«Путь Ленина» колхоз çураки ĕçĕсене районта ытти колхозсенчен малтан, агротехника кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçласа пынипе вĕçлерĕ. Колхозниксем кашни гектартан 110 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Коммунист И. Федоров юлташ ертсе пыракан уйхир бригади колхозра малта пырать, пур ĕççене те вăхăтра тăвать. В. Романов юлташ кружокра вĕрениччен халăх хушшинче тухса калаçма вăтанса тăратчĕ. Халĕ пачах урăхла. Вăл колхоз пухăвĕсенче те тухса калаçать, уйрăм калаçусем тата докладсем ирттерет. Парторганизаци хушнине тĕплĕн пурнăçласа пырать.

П. ВИКТОРОВ.

* * *

ЙĔПРЕÇ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче парторганизацисем çумĕнчи чылай кружоксенче итоглă занятисем политикăпа идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра иртрĕç. «Союзплодотара» заводри парторганизаци çумĕнчи кружока коммунист Мингалев ертсе пынă. Опытлă пропагандист кружокра вĕренекен коммунистсемпе парти ретĕнче тăманнисене съезд материалĕсене вĕрентес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕ. Вĕреннĕ материала ăнланмалла пултăр тесе, пропагандист занятисенче вырăнти тĕслĕхсене илсе кăтартнă. Çапла вĕрентнипе кружока çӳрекенсем материала аван ăнланса асра тытса юлнă. Итоглă занятисенче А. Петров, И. Красильников, И. Волков, В. Краснов юлташсем съезд материалĕсене аван пĕлнине кăтартрĕç. Съезд материалĕсене вĕренни коммунистсене те, партире тăманнисене те ĕç тухăçлăхне хăпартма пулăшрĕ, вĕсем производствăра лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Завод коллективĕ производство заданийĕсене кварталтан квартала ытлашшипех тултарса пырать.

Г. РУСАНОВ.

Партин Шупашкар хула комитетĕнче

Юлашки вăхăтра партин Шупашкар хула комитечĕ парти вĕренӳ çулне вĕçлеме хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ.

Парти вĕренӳ çулне йĕркеллĕ вĕçлесси çинчен хула комитечĕн бюровĕнче сӳтсе явнă. Ку ыйтупа кашни парти организацинех методикăлла çыру ярса панă. Çак кунсенче кружоксене тата политшкулсене ертсе пыракансемпе канашлусем ирттернĕ. Канашлусенче пропагандистсем хăйсем вĕренӳ çулне вĕçлеме епле хатĕрлени çинчен каласа панă.

Хула комитечĕн библиотеки пропагандистсем валли итоглă занятисене мĕнле ирттермеллине кăтартакан витрина тунă. Унсăр пуçне кашни кунах библиотекăра пропагандистсене методикăлла кăтартусем параççĕ.

Автобуса юсамасăр 140 пин километр çӳретессишĕн



☆

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарти автотранспорт кантурĕн шоферĕсем А. А. Герасимов (сулахайри) тата С. И. Послов юлташсем. Вĕсем автобуса юсамасăр 140 пин километр çӳретессишĕн ăмăртаççĕ. Ун çинчен хаçатра аяларах пичетленĕ статьяра çырнă.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

☆

Юлашки çулсенче çĕршывра çĕнĕ йышши илемлĕ те пысăк автобуссем туса кăларма тытăнчĕç. Нумай çын лармалли автобуссем халĕ Шупашкар урамĕсенче çеç мар, Канашпа Етĕрнене тата ытти район центрĕсене каймалли çулсем çинче те çӳреççĕ. Çакă Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви совет халăхĕн культурăпа йăла ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăрăшнине кăтартакан тĕслĕх пулса тăрать.

Эпир çĕнĕ йышши ГЗА-651 маркăллă автобус çинче ĕçлетпĕр. Ку автобус, 20 çын лармаллискер, Шупашкарпа Канаш хушшинче çӳрет. Ирхине 8 сехетре çул çине Сĕрпӳрен тухса, эпир каçхине 10 сехетчен пурĕ 250 километр хушши çӳретпĕр.

Сĕршыври промышленность туса кăларакан автобуссем хăйсен илемлĕхĕпе тата чăтăмлăхĕпе палăрса тăраççĕ. Коммунистсен партийĕ пире, шоферсене, хамăр алла шанса панă чаплă машинăсемпе тĕрĕс усă курма, вĕсене лайăх пăхса усрама, пассажирсене культурăлла çӳретессишĕн тăрăшма вĕрентет.

Иртнĕ çулхи март уйăхĕн пуçламăшĕнче эпир, кантур çĕнĕ автобус туяннă хыççăн, çав автобуса тĕпрен юсаттармасăр 140 пин километр чуптарма обязательство йышăнтăмăр. Çулталăк хушшинчи ĕçсен итогĕ панă сăмаха ăнăçлăн пурнăçлама май пуррине кăтартса парать.

Çĕнĕ машина çинче ĕçлеме тытăнсан хамăр умма çирĕп задача лартрăмăр: автобуса техника тĕлĕшĕнчен пăхса усрамалли правилăсене кирек мĕнле условисенче те тĕрĕс пурнăçласа пымалла. Пĕри теприн çине шанасси е паян тумалли ĕçе ырана хăварасси пирĕн ĕçре пулмалла, пулас та çук.

50 пин километр çӳриччен эпир машина çинчи пĕр детале те улăштарса курман. 50 пин километр çӳренĕ хыççăн тин мотор поршенĕсене улăштарма тиврĕ. Халĕ тата 50 пин километра яхăн çӳрерĕмĕр, апла пулин те машина пур енчен те юсавлă. Пирĕн условисенче кустăрма скачĕсене упрасси пысăк вырăн йышăнать. Çĕнĕ скатпа норма тăрăх 35 пин километртан кая мар çӳремелле. Скатсем çуллахи шăрăх кунсенче хăвăрт пĕтеççĕ. Анчах техникăлла правилăсене тĕрĕс пурнăçласан, уйрăмах вĕсем пушанасран е камера ăшĕнчи атмосфера пусăмĕ ытлашши пысăк пуласран сыхлансан скатсем нумая пыраççĕ. Пирĕн машина çинчи скатсем срокчен юрăхсăра тухни пулман.

Йышăннă обязательствăна пурнăçлас тесен, пирĕн автобуса тĕпрен юсаттармасăр 40 пин километр çӳресси юлчĕ. Иккĕленмелли çук, хамăрăн сăмаха эпир пурнăçлатпăрах. Государствăна тупăш памалли плана та ирттерсе тултаратпăр.

Пирĕн пассажирсем—рабочисемпе колхозниксем тата халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсенче ĕçлекен специалистсемпе служащисем. Вĕсем пире тимлĕ ĕçлеме хушаççĕ. Совет çыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтересси—пирĕн хисеплĕ ĕç. Эпир çавăншăн тăрăшатпăр та. Анчах хăшпĕр чухне пиртен килмен сăлтавсем пирки расписание пăсма тивет.

Кунта эпир уйрăмах çул-йĕр пахалăхĕ пирки каласшăн. 243-мĕш номерлĕ çул-йĕр эксплоатаци участокĕн кантурĕ (начальникĕ Муткин юлташ) Сĕрпӳпе Канаш хушшинчи çула кирлĕ пек тытма тăрăшмасть. Март уйăхĕнче, пĕр кунхине, çул çине купаланнă юра вăхăтра тасатман пирки, Канашран Сĕрпӳ хулине 7 сехет хушши килтĕмĕр, 30 килограмм горючи ытлашши пĕтрĕ.

Халĕ пур йышши автобуссем те çӳреççĕ. Анчах çул-йĕр работникĕсем çулсене юсама çине тăрса хатĕрленни курăнмасть.

С. ПОСЛОВ.
А. ГЕРАСИМОВ.

ПЕРЕКЕТЛĔХШĔН

Сĕмĕрлери экстракт тăвакан «Большевик» завод коллективĕ кăçалхи тăватă уйăхри производство планне 109,1 процент тултарнă. Экстракт тумалли плана 110,1 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 108,7 процент пурнăçланă. Коллективра перекетлĕхшĕн вăйлă кĕрешӳ пырать.

Завод тăватă уйăхра чĕртавар чылай перекетленĕ, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетнĕ.

М. Вильдянов, И. Дунюшкин, И. Миронов, А. Иванова, О. Власова, Т. Торочкина, А. Иванин стахановецсем тата ыттисем те куллен икшер норма тултарса пыраççĕ, чĕртавар нумай перекетлеççĕ.

Лайăх çул-йĕршĕн!

Малта пыракан бригада

СОВЕТСКИ. Çак кунсенче «Герой» колхоз председательне Г. Михайлов юлташа, çул-йĕр бригадин бригадирне Е. Иванов юлташа тата хастарлă колхозника Н. Кокорин юлташа Çул-йĕр управленийĕн Хисеплĕ грамотине пачĕç.

Пĕлтĕр колхоз çул-йĕр ĕçĕсен планне икĕ эрне хушшинче тултарнă. Колхоза районти тата республикăри Хисеп хăмисем çине кĕртнĕ.

Кунта темиçе çул хушши ĕнтĕ çулйĕр бригади ĕçлет. Ăна Е. Иванов юлташ ертсе пырать.—Лайăх çулсемшĕн тăрăшассишĕн—колхозниксен хисеплĕ тивĕçĕ,—тет вăл. Иванов юлташ бригада членĕсене лайăх ертсе пырать. Бригадăри Н. Кокорин колхозник пĕччен 40 кубометр чул хатĕрленĕ. Ытти колхозниксем те хăйсене панă задание ирттерсе тултарнă.

Бригада кăçал юр кайса пĕтсенех ĕçе тытăннă. Тăватă километр тăршшĕ çула юсанă, çĕнĕ кĕпер тунă, 170 кубометр ытла чул хатĕрленĕ.

Советскипе Етĕрне хушшинчи çул çинче куллен 50 çынран кая мар ĕçлет. Пĕрисем канав чаваççĕ, теприсем путăклă вырăнсене тӳрлетеççĕ.

Тăвай районĕнчи колхозниксемпе çулйĕр работникĕсем чĕнсе каланине сӳтсе явнă хыççăн, ял ĕçченĕсем строительство планне июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ. Халĕ вĕсем панă сăмаха пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

Я. СИГАЕВ.

Чул хатĕрлеççĕ

КОМСОМОЛЬСКИ. Сиккассипе Шăмăршă хушшинчи çул çинче «Дружба» колхоз членĕсем хĕрсех ĕçлеççĕ. Вĕсем 500 кубометр ытла тăпра чавса купаланă, вуншар кубометр чул кăларса турттарнă.

Берия ячĕпе тăракан колхозри çул-йĕр бригадине район Совечĕн депутачĕ С. Антонова юлташ ертсе пырать. Тăвай районĕнчи колхозниксен примерĕпе, бригада çул-йĕр ĕçĕсен планне июль уйăхĕнче тултарассишĕн кĕрешет.

«Красное Сормово» колхоз членĕсем планран ирттерсе чул хатĕрлерĕç.

Н. КВАСОВ.

Кĕпер тăваççĕ

ПЕРВОМАЙСКИ. 1952 çулта «Пионер» колхоз çул-йĕр строительстви планне ирттерсе тултарнă.

Кăçал колхозниксем çул-йĕр ĕçне майăн 9-мĕшĕнче, районти колхозсенчен чи малтан пуçăнчĕç. Вĕсем çĕнĕ кĕпер турĕç, сывăх кунсенче кивĕ кĕпере юсаса пĕтереççĕ.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 31 метр тăршшĕ кĕпер тума автомашинăпа пĕрене турттараççĕ.

А. ТУКМАКОВ.

Плана июнĕн 10-мĕшĕнче тултарма пулнă

ШĂХАСАН. Мичурин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнче çул-йĕр бригади турĕç. Бригадăра 40 çын. Колхоз правленийĕ материалсем турттарма икĕ автомашина, 35 лав уйăрнă.

Колхозниксем çул тумалли тата юсамалли плана июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕç. Çул çинче иртен пуçласа каçченех ĕç вĕресе тăрать. Нумаях пулмасть Канашпа Калинино хушшинчи çул хĕррине йывăç чылай лартса хăварчĕç. Йывăçсем пурте чĕрĕлеççĕ.

Çул-йĕр ĕçне Ворошилов ячĕпе, Маленков ячĕпе тăракан колхозсем те хутшăннă.

ОБЩЕСТВĂЛЛА ПУРЛĂХА ТИРПЕЙЛĔ СЫХЛАСА УСРАССИШĔН

Пирĕн çĕршыв питĕ пуян. Государство бюджечĕ çултан-çул ӳссе пырать, çĕнĕ стройкăсем валли, культурăпа искусствăна тата наукăна аталантарма государство çулсеренех укçа-тенкĕ нумай уйăрса парать. Çĕршывăн пуянлăхĕ тăтăшах ӳснĕ май социализмла пурлăха сыхласа усрас, государство укçи-тенкине тĕрĕс расходлас тĕлĕшпе кашни совет гражданинĕн, ертсе пыракан кашни работникăн ответлăхĕ пĕрмаях ӳссе пырать.

Партин XIX-мĕш съездĕнче Г. М. Маленков юлташ çапла кăтартса пачĕ: «Совет çыннисене обществăлла, социализмла пурлăха тирпейлĕ тытса усрама воспитани парассишĕн пирĕн яланах ывăнма пĕлмесĕр тăрăшас пулать. Пурлăх, ĕç вăйĕ тата укçа-тенкĕ ресурсĕсене ытлашши расходлассине пĕтĕмпех пĕтерес пулать, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетес енĕпе панă заданисене яланах тултарса тата ирттерсе тултарса пымалла». Хуçалăх планĕсене тултарнине, терĕ Маленков юлташ, тата перекетлĕх режимне тытса пынине финанс органĕсем укçапа тĕрĕслесе тăрассине вăйлатмалла.

Улатăр хулинчи промышленноçра тата транспорт çинче ĕçлекенсем парти кăтартăвне тĕрĕс ăнланаççĕ, ăна пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса тăрăшаççĕ. Вĕсем ĕç тухăçлăхĕшĕн тимлĕн кĕрешеççĕ, государство укçи-тенкине перекетлесе хăвараççĕ.

Пăравус деповĕнчи иккĕмĕш комплексла бригада (бригадирĕ Доронин юлташ) малта пыракансен ĕç меслечĕсемпе усă курать, материалсене перекетлĕн расходлать. Бригада иртнĕ пилĕк уйăх хушшинче 18.100 тенкĕ, вăл шутран ĕç укçи 12.400 тенкĕ, запаслă пайсем тата материалсем 5.700 тенкĕлĕх перекетлесе хăварчĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ П. Казяев машинист 14.700 тенкĕлĕх, К. Серебряков машинист 16.200 тенкĕлĕх. В. Ветчинкин машинист 10.800 тенкĕлĕх, Н. Голованов машинист 11.200 тенкĕлĕх, В. Артемьев машинист 8.700 тенкĕлĕх çĕр кăмрăкĕ перекетлерĕç.

Пăравуссем юсакан заводра рабочисен тата инженерсемпе техниксен рационализаторла сĕнĕвĕсене производствăна кĕртсе пыраççĕ. Çавна май кунта вуншар пин тенкĕ укçа перекетлеççĕ. Сăмахран, Хайтбашьян инженер моторăн усăллă коэффициентне ӳстерме сĕнӳ панă. Çак сĕнĕве пурнăçа кĕртнине пула завод çулталăк хушшинче 7.795 тенкĕлĕх электроэнерги перекетлесе хăварать. Попов мастер фрезăсен ĕмĕрне тăсма сĕннĕ. Ăна çапла тăваççĕ: ик-виçĕ метала шăратса хутăштарса пулнă тăватă çирĕп пластинкăна кивĕ фрезăсен йăвине вырнаçтарса лартаççĕ. Инструментпа ытларах ĕçленĕ май завод 16 пин тенкĕ ытла перекетлет. Сборнăй цех разметчикĕ Артамонов юлташ сĕннипе подшипниксем шăратса кăларассине лайăхлатнă. Ку вăл çулталăкра тĕслĕ металсем 7.954 тенкĕлĕх, ĕç укçи 2.451 тенкĕ перекетлеме пулăшать. Электростанцин смена начальникĕ Яковлев юлташ сĕнĕвне шута илсе, пăспа ĕçлекен турбинăсем вырнаçтарса лартнă. Вĕсем çулталăкра 13 пин тенкĕ перекетлесе хăварма май параççĕ.

Махорка фабрикинчи Крупнов тата Гуськов юлташсем махорка тултаракан машинăсене майлаштарса тăрас ĕçе ăста вĕренсе çитнĕ. 850 килограмм хут перекетлесе хăварнă.

«Красная швея» артельти С. Костин, Е. Носкова тата Бубнов закройщиксем юлашки пилĕк уйăх хушшинче 586 метр пир-авăр перекетленĕ.

Атă-пушмак фабрикинчи Дудрова, Варгина, Кулькова, Китаева, Кулыгина, Барашкина, Сазанов, Горчакова юлташсем 43.338 тенкĕлĕх материал перекетленĕ.

Çакăн пек паха тĕслĕхсене татах та илсе кăтартма пулĕччĕ. Рабочисем тата инженерсемпе техниксем ĕçре хастарлăх кăтартакан, социализмла пурлăха ӳстерессишĕн çĕнĕ ĕç меслечĕсене çине тăрса пурнăçлакан тĕслĕхсене кашни предприятипе учрежденирех сахал мар курма пулать.

Социализмла пурлăха тирпейлĕ тытса усрасси, ăна тăтăшах малалла ӳстерсе пырасси çинчен ыйту хускатнă чухне эпир яланах çакна асра тытатпăр: производство новаторĕсен опытне, перекетлĕхпе типтерлĕх ĕçĕнчи паха опытсене сарасси, обществăлла пурлăха салатса пĕтернине хирĕç, хуçасăрлăха хирĕç кĕрешесси парти организацийĕсен ответлă задачи пулса тăрать.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн кăтартăвĕсене пурнăçласа, КПСС Улатăр хула комитечĕ ĕçсыннисемпе коммунистсене социализмла пурлăха тирпейлĕ тытса усрама воспитани парас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерет. Кăçалхи март уйăхĕнче промышленность предприятийĕсенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсен семинарне ирттернĕ. Кунта, конкретлă примерсем илсе, социализмла пурлăха çирĕп сыхласа усрас тĕлĕшпе пуçламăш парторганизацисен мĕн тумаллине пăхса тухнă. Çак ыйтăва пуçламăш парторганизацисенче те час-часах сӳтсе яваççĕ. КПСС хула комитечĕ çакăн пек задача лартать: государство пурлăхне типтерсĕр тыткаланă кашни факта парторганизацисен пĕлсе тăмалла, çавăн пек йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме мерăсем хăвăрт йышăнмалла.

Çитменлĕхсене курмасăр иртсе кайни пысăк йăнăш пулнă пулĕччĕ. Государство пурлăхне питĕ типтерсĕр тыткаласа усранă тĕслĕхсем малта илсе кăтартнă предприятисенче те сахал мар-ха.

Чугун çул уйрăмĕн руководителĕсем çаврăнăçусăр пулнипе Йĕпреç станцинче ылмаштаракан яланлăх бригадăсем йĕркелемен. Çавăн пирки уйăхра 10.000 тенке яхăн ĕç укçи ытларах расходлаççĕ. Йĕпреç станцинчи пунктра яланхи пăравус бригадисем тусан, çав усăсăр тăкак пулман пулĕччĕ. Пăравуссене юсама вăхăтра тăратман пирки бригадăсем ĕçсĕр тăнисем пулаççĕ. Çакăншăн та уйăхсерен виçĕ пин тенкĕ таран ытлашши тӳлеме лекет. Хуçалăхри тата маневрти пăравуссене пăхса тăнăшăн кашни уйăхра усăсăр 6.000 тенкĕ таран тăкаклама тивет. Çавăн пек усăсăр тăкаксем депо тупăшне чакараççĕ. Çул уйрăмĕн руководстви (начальникĕ Ширяев юлташ, депо начальникĕ Царев юлташ) тата парторганизацисем усăсăр тăкаксем пулнине пĕлеççĕ, анчах вĕсене пĕтерме мерăсем йышăнмаççĕ.

Пăравуссем юсакан заводра рационализаци тата изобретательство ĕçĕ сарăлса пырать терĕмĕр. Сĕршер рабочисем, инженерсемпе техниксем ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, тупăш ытларах тăвассишĕн тимлĕн тăрăшаççĕ. Çав вăхăтрах асăннă предприятире укçа-тенкĕ усăсăр сĕршер пин тенкĕ тăкакланине те курма пулать. Ку вăл завод руководстви, бухгалтери тата парторганизаци ĕçе тăтăшах тĕрĕслесе тăманнинчен килет. Акă пĕр витĕмлĕ тĕслĕх. Юлашки пилĕк уйăх хушшинче пăравуссене çителĕксĕр пахалăхпа юсанипе тата брак тунипе 79 пин тенкĕ сиен курнă. Заводăн çав вăхăт хушшинче 84.000 тенкĕ тупăш илмелле пулнă пулсан, вăл 338.020 тенкĕ убыток тӳснĕ. Çакă завод начальникне Соколов юлташа, партбюрона (секретарĕ Киняшов юлташ) хытă шухăшлаттармалла. Производство планне пур кăтартусем енĕпе те тултарассишĕн ĕçленĕ вăхăтрах финанс хуçалăхĕ çирĕп пулмаллине, государство укçи-тенкине хытă перекетлеме кирлине нĕрре те манма юрамасть.

Укçа-тенке типтерсĕр тыткаланине чылай предприятисемпе учрежденисем тĕрлĕ штрафсем тӳлени те кăтартса парать. Штраф укçине айăплă çынсенчен шыраса илмеççĕ, ăна тӳрех производство шутĕнчен тӳлеççĕ. Çакă вара предприятин финанс хуçалăхне хавшатать, продукцин хăйне ларакан хакне ӳстерет, материалсемшĕн ответлă пулса тăракан çынсем хушшинче дисциплинăна çирĕплетме кансĕрлет.

Пăравуссем юсакан заводра тата йывăç япаласем тăвакан комбинатра вагонсене ахаль тăратнăшăн 5 уйăх хушшинче 13 пин тенке яхăн штраф тӳленĕ. Çакăн пек йĕркесĕрлĕхпе, паллах, килĕшсе ларма çук. Ку вăл предприяти руководителĕсемпе парторганизацисем хуçалăха çителĕксĕр ертсе пынине, ăна тĕрĕслесе тăманнине кăтартса парать.

Илсе кăтартнă çитменлĕхсене нумайăшне вырăнти вăйпах пĕтерме май пур. Предприяти руководителĕсен, пуçламăш парторганизацисен производствăна вăйлатса лайăхлатассишĕн ответлăха ытларах туйса ĕçлемелле. Ку енĕпе парти хула комитечĕн те хăйĕн ответлăхне ӳстермелле.

Автомашинăсем юсакан мастерскойăн (ЦРМ) государство умĕнчи парăмсене вăхăтра тӳлемен укçа хисепĕ 482 пин тенке çитнĕ. Çав мастерской убыток тӳснин сăлтавĕ çакăнта: машинăсене юсама планпа пăхниччен икĕ хута яхăн ытларах тăкаксем тухаççĕ. Мастерской автомашинăсен запаслă пайĕсене чертежсем тăрăх мар, образецсем тăрăх тăвать. Мастерскойĕнче технологи карттисем çук. Çавăн пирки брак нумай пулать. Мастерскойăн финанс хуçалăхĕ йывăрлăхра пулни çакăнтан та курăнать: унăн Госбанкри текущи счетне пилĕк çул ытла каяллах хупнă. Расчетсем тунă чухне мастерской руководстви пĕлнĕ çĕртенех финанс дисциплинине пăсать, операцисене час-часах Госбанк уйрăмĕ урлă тумасть. Ку вара хăй черечĕпе касса планне тултарма чăрмантарать.

Ку мастерской пĕчĕк предприяти мар. Юлашки çулталăк çурă хушшинче кăна строительствăна 2 миллион тенке яхăн хывнă. «Чăвашвăрман» трестĕн управляющийĕ Киркин юлташ мастерской начар ĕçленине пĕлет, апла пулин те унăн хуçалăхне лайăхлатса вăйлатма мерăсем йышăнмасть.

Уйрăм руководительсем тимсĕр пулнипе, кадрсен пахалăхне пĕлменнипе те государство укçи тĕлли-паллисĕр саланни пулкалать. Хула Совет исполкомĕн коммунальнăй хуçалăх пайĕнче Макурина кассир икĕ çул хушшинче государство укçине 15 пин тенке яхăн тустарса пĕтернĕ. Макуринăна çавăн пек киревсĕр ĕçсемшĕн унччен ответ тыттарнине нумай работниксем пĕлсе тăнă.

Хула больницин хушма хуçалăхĕнче бухгалтер пулнă Сетянов государство укçине 15 пин тенкĕ вăрланă. Çавăн пек киревсĕр ĕçсемшĕнех ăна халиччен судпа айăплани малтанах паллă пулнă.

Пурлăх, укçа-тенкĕ тата ĕç ресурсĕсене расходлас тĕлĕшпе пур çĕрте те çирĕп йĕрке туса хуни кирлĕ. Партипе совет органĕсен ĕçсыннисене перекетлĕх режимне тăтăшах тытса пыма мобилизацилемелле.

Социализмла пурлăх Совет государствин экономикăлла никĕсĕ пулса тăрать. Çав пурлăха тирпейлĕ тыткаласси, ăна малалла ӳстерсе пырасси—кашни совет çыннин чыслă тивĕçĕ.

В. ЧИСТОПОЛЬСКИЙ,
КПСС Улатăр хула комитечĕн секретарĕ.

„Гвардеец“ колхоз опычĕпе усă курса

Кăçалхи çуракинче пирĕн районти колхозсем выльăх апатĕн çирĕп никĕсне тăвас задачăна ăнăçлă пурнăçласа пычĕç. Нумай колхозсем выльăх апатне каякан культурăсене лайăх сухаласа тата удобренисемпе çемçетнĕ лаптăк çине акса хăварчĕç.

Майăн 20-мĕшĕ тĕлне район тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем, нумай çул ӳсекен курăксем, тымарçимĕçсем тата силос культурисемпе пĕр çул ӳсекен курăксем акмалли государство планне ăнăçлă тултарчĕ. Тулă тата нумай çул ӳсекен курăксене планран иртерсе акса хăварнă. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли кăçал судан курăкĕ тата кукуруза чылай акнă. Пур колхозсенче те выльăх апачĕ акса тумалли пусă çавранăшĕсем йĕркеленĕ, 26 колхозра выльăх апачĕ хатĕрлеме ятарласа организациленĕ бригадăсем ĕçлеççĕ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатма, продуктивлă выльăхсен тухăçлăхне ӳстерме выльăх апачĕн çирĕп никĕсне тăвас тĕлĕшпе районти колхозсем кăсал республикăри Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозăн ĕç опычĕпе анлăн усă курчĕç. Пирĕн районти нумай колхозсенчи пекех, «Гвардеец» колхозăн улăх-çарансем тата кĕтӳ кĕтмелли вырăнсем пачах çук. Çапла пулсан та, ку колхозра выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ хатĕрлесе тăрас задачăна ăнăçлă татса панă. Колхоз хăйĕн çĕрĕ çинче тырпул тата выльăх апачĕ акса тумалли тĕрĕс пусă çавранăшĕсем йĕркеленĕ, выльăхсене çуркуннерен пуçласа хĕле кĕричченех тутă усрама симĕс конвейер организациленĕ.

Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозăн выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçри опытне районти колхозсенче пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе эпир çураки вăхăтĕнче çакăн пек организациле ĕçсем туса ирттертĕмĕр. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕ «Гвардеец» колхозăн ĕç опытне сарасси çинчен йышăннă постановлени парти райкомĕн бюровĕнче тĕплĕн сӳтсе яврăмăр. Çак паха опыта районти колхозсенче пурнăçа кĕртсе пымалли майсене уçса палăртрăмăр.

Кун хыççăн районти парти активĕнчен 30 коммуниста колхозсене ятăмăр. Вĕсем пулăшнипе колхозсенчи парторганизацисем колхозниксене «Гвардеец» колхозăн паха ĕçĕпе тĕплĕн паллаштарчĕç, колхоз правленийĕсем выльăх апачĕ акса тăвас тĕлĕшпе çуркунне тумалли ĕçсене палăртрĕç.

Майăн 13-мĕшĕнче районти Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра колхоз председателĕсен тата выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăсен бригадирĕсен семинарне ирттертĕмĕр. Семинарта Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз агрономĕ Васильева юлташ выльăх апатне каякан культурăсен агротехники çинчен тата Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозра выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе мĕнле организациленĕ çинчен каласа панă. Семинар хыççăн председательсемпе бригадирсем Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлес ĕçе мĕнле организациленипе паллашрĕç.

Малта пыракан колхозсен опычĕ выльăх апачĕн никĕсне çирĕплетме пирĕн колхозсенче пысăк резервсем пуррине кăтартса парать. Социализмла Ĕç Геройĕ В. Зайцев юлташ ертсе пыракан, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта силос культурисем вăтам шутпа кашни гектартан 570 центнер, тымарçимĕçсем—581-шер центнер, нумай çул ӳсекен курăксем 44-шар центнер пухса кĕртнĕ. Выльăх апачĕ çителĕклĕ туса илнипе колхоз иртнĕ хĕлте хăйĕн обществăлла выльăх-чĕрлĕхне тутă, мăнтăр усрарĕ, вĕсенчен илекен тупăша ӳстерчĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз «Гвардеец» колхозпа ăмăртать. Выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçри вĕсен опытне колхозри парторганизацин уçă пухăвĕнче тата правлени ларăвĕнче сӳтсе явнă. Колхоз кăсал выльăх апатне иртнĕ çулхинчен 100 гектар ытларах акса тума, выльăх апачĕ акса тăвакан пусă çавранăшĕнче вара 250 гектар çинче акса тума йышăнчĕ. «Гвардеец» колхозăн опычĕпе усă курса, кунта кăçал хĕвелçавранăшĕпе викăпа хутăш акса хăварнă, судан курăкне нумай акнă, тымарçимĕçсемпе курăксем акмалли плана пысăк пахалăхпа пурнăçланă. Кунсăр пуçне колхоз кăçал выльăхсене симĕсле çитерме 100 гектар çине ятарласа ыраш акнă. Халĕ викăпа сĕлĕ çитĕнекен вырăнта, ăна выльăха симĕсле çитерме çулнă хыççăн, турнепс акса тăвать.

Колхозăн выльăх апачĕ хатĕрлекен бригади кăçал кашни гектар пуçне выльăх кăшманĕ—600 центнер, силос массине—400 центнер, çĕрулми—200 центнер, пĕр çул ӳсекен курăксем—200 центнер, судан курăкĕ—300 центнер, нумай çул ӳсекен курăксен ути 50 центнер пухса кĕртме социализмла обязательство илнĕ. Выльăх апачĕ хатĕрлекен бригадăн обязательствисем çине ответлесе, дояркăсем кашни сăвакан ĕнерен 2.000-шер литр сĕт суса илме сăмах панă.

Выльăх апачĕн никĕсне çирĕплетес задачăна ăнăçлă пурнăçласа пыракан колхозсене районта татах илсе кăтартма пулать. «Трактор» колхоз иртнĕ çулта выльăх апачĕлĕх акнă культурăсене лайăх пăхса ӳстерсе нумай пухса кĕртнĕ. Выльăх кишĕрĕ, сăмахран, кашни гектартан 560 центнер тухнă. Хĕл каçах паха апат çитерсе усранă май кăçал ку колхозра ĕнесем мăнтăр. Иртнĕ çулта вĕсенчен 1.455-шер литр сĕт суса илнĕ, кăçал 4 уйăх хушшинче кашни ĕнерен 500-шер литр сĕт сунă.

Выльăх апатне каякан культурăсене колхозра кăçал та пысăк пахалăхпа акса хăварнă. Силос культурине кĕрхи çĕртме тунă вырăна культиваци туса сеялкăсемпе акнă. Çав вырăнах урлă май вика акса хăварнă. Выльăх кăшманĕ акмалли лаптăка удобренисемпе лайăх çемçетнĕ, вăрлăха трактор сеялкипе сарлака ретлĕн акнă. Ку колхозăн выльăх апачĕ хатĕрлекен бригадине В. Судаков юлташ ертсе пырать. Бригадăри колхозниксем кăçал та выльăх апачĕ тумалли культурăсене тухăçлă ӳстерсе илессишĕн пикенсе ĕçлеççĕ.

«Пахарь», «Марс», «Малалла», «Красное знамя», Мичурин ячĕпе, М. Горький ячĕпе, Сталин ячĕпе тăракан тата ытти нумай колхозсем выльăх апачĕ акса тăвас ĕçе çултан çулах лайăхлатса пыраççĕ.

Анчах выльăх апачĕ нумайрах акса тăвас, культурăсен тухăçлăхне ӳстерес, çапла вара обществăлла выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕпе тухăçлăхне ӳстерме çирĕп никĕс тăвас задачăна япăх пурнăçласа пыракан колхозсем те районта чылай-ха. Пушкин ячĕпе, Свердлов ячĕпе, Чкалов ячĕпе тăракан, «Хунав» колхозсем кăçал нумай çул тата пĕр çул ӳсекен курăксем акмалли плана тултармарĕç.

Районти колхозсенче çурхи ĕçсем халĕ вĕçленсе пыраççĕ. Çураки планне пур культурăсем енĕпе те ăнăçлă тултарнă колхозсен хисепĕ кунтан-кун хушăнса пырать. Халĕ умра тăракан ответлă задачăсенчен пĕри вăл ялхуçалăх культурисене лайăх пăхса ӳстересси пулать. Районти колхозсен çак ĕçре те «Гвардеец» колхозăн ĕç опычĕпе анлăн усă курмалла. Калчасене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе агротехникăлла ĕçсене тĕплĕн пурнăçламалла. Пысăк тухăçлă тымарçимĕçсемпе çĕрулми туса илессишĕн кĕрешмелле.

Çакăнпа пĕрлех, колхоз правленийĕсем, колхозсенчи парторганизацисем халĕ колхозниксен пĕтĕм вăйне улăх-çарансенчи тата акнă курăксене тирпейлĕ пухса кĕртме, силос хывма мобилизацилемелле. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕçе куллен организацилесе ертсе пымалла.

Г. АЛЕКСЕЕВ,
КПСС Елчĕк райкомĕн секретарĕ.

Шкулсенчи экзаменсем

Çитменлĕхсене халех пĕтермелле

Экзаменсем пуçланни пĕр эрне иртрĕ. Шупашкарти 6-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсем экзаменсенче лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ, нумайăшĕ пур предметсемпе те «5» тата «4» паллăсем илеççĕ. Шкулти 4-мĕш, 7-мĕш, 10-мĕш классенче вĕренекенсем вырăс чĕлхипе çырса экзамен пачĕç. Вĕсенчен чылайăшĕ типтерлĕ, таса çырнă. 4-мĕш класра вĕренекенсем те лайăх тĕслĕх кăтартрĕç. Кунта 32 вĕренекенрен 23 ача «5» тата «4» паллăсем илчĕç. Вуннăмĕш класра вĕренекенсем вырăс литературипе сочиненисем лайăх çырнă.

Çак ӳсĕмсем шкулти учительсем вĕренекенсене çирĕп те тĕплĕ пĕлӳ пама тăрăшнинчен, çамрăк ăрăва коммунистла воспитани парас ĕçе тивĕçлипе туса пынинчен килнĕ.

Анчах экзаменсен малтанхи кунĕсенчех çитменлĕхсем те палăрчĕç. Хăшпĕр вĕренекенсем экзаменсене çителĕклĕ хатĕрленсе килмен. Çавăнпа та вĕсем начар паллăсем илнĕ. Çакă вăл уйрăмах пиллĕкмĕш классенче арифметикăпа ирттернĕ экзаменсенче палăрчĕ.

Çавăн пекех хăшпĕр вĕренекенсем экзамен пама пыман. Аслă классенче вĕренекен уйрăм шкул ачисем экзаменсенчи ответлăхран пăрăнма пăхнă.

Экзаменсене пур ачасене те хутшăнтарас тĕлĕшпе учительсем, ача ашшĕ-амăшĕсем çине тăрса ĕçлени кирлĕ.

Ассистентсен экзаменсенчи ответлăхĕ пысăк. Нумай учительсем ассистент ĕçне тӳрĕ кăмăлпа, тăрăшса тăваççĕ. Вĕсем шкул ачисен пĕлĕвне пур енчен те тĕрĕс хаклаççĕ. Анчах çав вăхăтрах хăшпĕр ассистентсем хăйсен ĕçĕ çине çиелтен пăхни палăрать. Акă, тĕслĕхрен, çиччĕмĕш классенче изложени çырнă чухне икĕ учитель ассистентсем пулнă. Вĕсем шкул ачисен çыру ĕçне пăхса тухма хутшăнман, учитель ачасен пĕлĕвне хăй тĕллĕн çеç хакланă. Паллах ĕнтĕ, шкул ачисен пĕлĕвне хакланă çĕрте йăнăшсем те пулма пултарнă.

Ассистентсен экзаменсенче активлăрах пулмалла, ачасен пĕлĕвĕсене тĕплĕн, тĕрĕс хак пама тăрăшмалла.

Хăшпĕр экзаминаторсем экзаменсене урок евĕрлĕ ирттереççĕ. Вĕренекен каласа пĕтеричченех ăна ыйту параççĕ, унăн ответне юсаççĕ. Ачасене билет тăрăх каласа панă чухне пӳлни вĕренекене хумхантарать. Çавăнпа та вĕренекен билет тăрăх пĕтĕмпех ответлесе пĕтериччен ăна чарма кирлĕ мар. Экзамен вăхăтĕнче шкул ачисемпе кăмăллăн калаçмалла, хăтăрни, вĕренекене кӳрентерни пулмалла мар.

Асăннă çитменлĕхсене кĕске срокра пĕтересси, экзаменсене тĕрĕс, инструкцире кăтартнă пек ирттересси — экзаминаторсемпе ассистентсен чысла тивĕçĕ.

В. ИВАРБЕЕВ,
Шупашкарти 6-мĕш номерлĕ вăтам шкул директорĕ.

Çирĕп пĕлӳ илнĕ

КУСЛАВККА. Иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкулта çуртсем тăвакан рабочисем вĕренеççĕ. Завод шкул валли икĕ илемлĕ çурт лартса панă. Кăçал вĕренекенсен йышĕ татах ӳснĕ май виççĕмĕш çурт тăвасшăн.

Шкул коллективĕ çуркуннехи экзамена тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Экзаменсен малтанхи результачĕсем вĕрентӳпе воспитани тĕлĕшпе çĕнĕ ӳсĕмсем туни çинчен калаççĕ. 7-мĕш классенче 77 ача вĕренет, Вĕренӳре ĕлкĕрсе пынине кура, вĕсене пурне те экзаменсем тытма ирĕк панă. Малтанхи кунра çиччĕмĕш класра вĕренекенсем вырăс чĕлхипе изложени çырчĕç. Комисси тĕрĕсленĕ хыççăн çакă курăнчĕ: япăх çырнă ĕç пĕрре те çук, 42 ĕçе «5» тата «4» паллăсемпе хакланă.

В. Голубевпа В. Аверьянова юлташсем çак шкулта арифметика вĕрентеççĕ. Вĕсен пархатарлă ĕçĕ экзаменсен малтанхи кунĕсенчех палăрчĕ. Улттăмĕш классенче арифметикăпа çырнă 73 ĕçрен 42 ĕçе «5» паллăпа, 37 ĕçе «4» паллăпа хакланă.

8-мĕш классенче вĕренекенсем алгебрăпа çырса ирттернĕ экзамена ăнăçлă тытнă.

Çамрăксен вăтам шкулĕнче заводра ĕçлекен рабочисем производствăран уйрăлмасăр вĕренеççĕ. Шкулта çитĕнсе çитнисен аттестатне илме 20 çамрăк экзамен тытать, вырăс литературипе сочинени ăнăçлă çырнă. 4 çамрăкăн ĕçне «5» паллăпа хакланă. Ытти предметсемпе те экзаменсем ăнăçлă иртеççĕ.

Т. ИВАНОВ.

Ӳсĕмсемпе çитменлĕхсем

КОМСОМОЛЬСКИ. Районти шкулсенче экзаменсем йĕркеллĕ пуçланчĕç. Кунти шкулсенче 4.105 ача экзамен парать.

Комсомольскинчи вăтам шкул. 10-мĕш класра вĕренекенсем малтанхи кун вырăс литературипе сочинени çырчĕç. Экзамена хутшăннă 71 вĕренекентен пурте сочиненисене тĕплĕ çырнă. Уйрăмах 10-мĕш «А» класра вĕренекенсем сочиненисене лайăх çырнă. Ку класра вырăс литературине район Совечĕн депутачĕ Екатерина Алексеевна Алексеева вĕрентнĕ. Вĕренекенсенчен нумайăшĕ парти совет халăхне захватчиксене хирĕç кĕрешӳре ертсе пыни çинчен (А. Фадеевăн «Çамрăк гварди» романĕ тăрăх) çырнă.

Совет çĕршывĕнче пурăнакан çамрăксене çеç мар, пĕтĕм тĕнчери çамрăксен чĕрине хумхантараççĕ романри геройсен ĕçĕсем. Вĕсем тунă вилĕмсĕр ĕçсем çинчен, çак ĕçсене тума хавхалантарса, ертсе пынă коммунистсен ролĕ çинчен камăн каласа, çырса парас килмĕ?

Лăпкăн, тарăн шухăшпа çырчĕç вĕренекенсем сочиненисене. Акă Васильев вĕренекен çырнă сочинени. Миçе хут вуласа тухнă пулĕ вăл ку чаплă романа! Вăл «Çамрăк гварди» организацине ертсе пынă коммунистсен ĕçĕсем çинчен уйрăммăнах уççăн, ăнланмалла çырнă. Упăн сочиненийĕ лайăх паллă илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Вăрманхĕрри Чурачăкри вăтам шкулти 10-мĕш классенче вĕренекенсем те сочиненисене лайăх çырнă.

Çиччĕмĕш классенче вĕренекенсем «Миршĕн кĕрешни» темăпа изложени çырчĕç. Уйрăмах Нĕркеçри çичĕ çул вĕренмелли шкулти вĕренекенсем çыру ĕçне аван тунине палăртмалла. Ку шкулти çиччĕмĕш классенче вĕренекенсене пурне те экзамена кĕртнĕ. Вĕсем çыру ĕçĕпе япăх паллă илни пулман. Çавăн пекех 6-мĕш классенче вĕренекенсем те арифметикăпа çырса «5», «4», «3» паллăсем çеç илчĕç.

Комсомольскинчи вăтам шкулти 7-мĕш класра, Луцкинчи пуçламăш шкулти 4-мĕш класра, Эткерти пуçламăш шкулти 4-мĕш класра вĕренекенсем те вырăс литературипе изложени тата диктант аван çырчĕç. Çак шкулсенче япăх паллăсем илнĕ ачасем пачах та çук.

Малтанхи кунсем хăшпĕр шкулсенче экзаменсене тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илменнине те кăтартрĕç. Кĕсĕн Çĕрпӳелĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти 5-мĕш класра вĕренекенсем (учительница А. Викторова юлташ) çурри ытла арифметикăпа çыру ĕçне япăх тунă. Вырăс литературипе те (учительница Т. Карпеева юлташ) 52 ачаран вуниççĕшĕ изложени начар çырнă.

Л. ТАЛЛЕРОВ.

Районти хаçатсем стена хаçачĕсем çинчен

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ лартнă аслă задачăсене пурнăçа кĕртме ĕççынсене мобилизацилес ĕçре стена хаçачĕ паллă вырăн йышăнать. Вăл — пуçламăш парторганизацин çивĕч хĕçпăшалĕ, ĕçри паха опыта сармалли, аялтан килекен критикăна вăйлатмалли трибуна.

Парти райкомĕсемпе пуçламăш организацисем нумайăшĕ стена хаçачĕсен пĕлтерĕшне пысăка хурса хаклаççĕ. Вĕсен ĕçне тăтăш ертсе пыраççĕ. Çавăнпа унта стена хаçачĕсем ĕççынисем юратакан хаçатсем пулса тăнă.

Акă Куславкка районĕнчи «Ленин ялавĕпе» хаçатăн 37-мĕш номерне илер. Унта «Колхозниксем юратакан хаçат» ятлă статья пичетленнĕ. Автор «Ударник» колхозри уйăхра виçĕ хут тухса тăракан «Коммунизмшăн» стена хаçачĕн (редакторĕ колхозри агротехник Н. А. Соловьев) ĕçĕ çинчен каласа панă. Статьяра каланă тăрăх, ку хаçатăн пĕрремĕш номерĕ 1929 çулта тухнă. Çавăнтан вара ăна 1.095 номер кăларнă. Пĕлтĕр — 46, кăçалхи 4 уйăхра 12 номер тухнă. Хаçат колхозри малта пыракансен паха опытне, социализмла ăмăрту мĕнле пынине çутатать. Унта хисеп хăми, сезонла ĕçсем мĕнле пынине кăтартакан сводкăсем пур. Колхозри çитменлĕхсене çивĕччĕн критиклекен статьясем тухаççĕ. Хаçатра çырнă хыççăн çитменлĕхсене мĕнле пĕтерни çинчен вулакансене пĕлтереççĕ. Хаçат çине колхозниксем йышлăн çырса тăраççĕ. Статьяра çырнă тăрăх, хаçат йĕркеллĕ тухса тăни, ăна парторганизаци тăтăш ертсе пынинчен килет. Колхозри коммунистсен пухăвĕнче стена хаçат ĕçĕ çинчен пĕлтĕр икĕ хутчен, кăçал пĕр хут сӳтсе явнă. Редколлегинче ĕçлеме парторганизаци икĕ коммуниста уйăрса панă.

Çавнашкалах Шăхасан районĕнчи «Вăйлă тырпулшăн» хаçат та хăйĕн 41-мĕш номерĕнче Сталин ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци секретарĕ В. Семенов статьине пичетлет. Вăл хăйĕн «Стена хаçачĕ — парторганизацин çивĕч хĕçпăшалĕ» ятлă статьинче парторганизаци хаçат ĕçне мĕнле ертсе пыни, унăн урлă критикăпа самокритикăна вăйлатни, хаçатăн витĕмлĕхне, унăн авторĕсен йышне ӳстерни çинчен примерсемпе кăтартса парать.

Советски районĕнчи «Совет ялавĕ» хаçат хăйĕн 40-мĕш номерĕнче КПСС райкомĕн бюровĕ, «Герой» колхозри стена хаçачĕ çинчен сӳтсе явса, унăн ĕçне лайăхлатма решени йышăнни çинчен çырать.

Парторганизацисем стена хаçачĕсене ертсе пыни çинчен çутатса, асăннă хаçатсем, паллах, ытти парторганизацисене те ку ĕçе лайăхлатма пулăшаççĕ. Мĕншĕн тесен стена хаçачĕсем, вĕсене парторганизацисем куллен ертсе пырсан кăна хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнма пултараççĕ.

Стена хаçачĕсен ĕçне лайăхлатма районти хаçатсем енчен тăтăшах пулăшни пулмалла. Юлашки вăхăтра хăшпĕр районти хаçатсем «Стена хаçачĕсене пăхса тухни», «Стена хаçачĕ çинчен вулакансем мĕн калаççĕ» ятлă материалсем пичетлеме тытăнчĕç. Ку—лайăх пуçару, стена хаçат редколлегийĕсене чылай пулăшу пама пултарать.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Ленин ялавĕ» хаçат 40-мĕш номерте «Колхозниксен лайăх помощници» ятлă статья пичетленĕ. Унта «Светлый путь» колхозри «Сталинец» стена хаçачĕ уй-хир ĕçĕнче, выльăх-чĕрлĕх пăхнă çĕрте ăмăрту мĕнле сарăлнине çутатса пынине тĕплĕн, примерсем илсе кăтартса панă. Шăхасан районĕнчи «Вăйлă тырпулшăн» хаçат та хăйĕн 35-мĕш номерĕнче «Пурнăçпа тан пыракан стена хаçачĕ» ятлă статья пичетлесе стена хаçат редколлегийĕсене усăллă канашсем панă.

Анчах хăшпĕр районти хаçатсем япăх стена хаçачĕсем çинчен çеç çыраççĕ, çитменлĕхсене мĕнле пĕтермеллине вĕрентмеççĕ, лайăх стена хаçачĕсен опычĕпе паллаштармаççĕ.

Сăмахран, Йĕпреç районĕнчи «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçат кăçал стена хаçачĕсем çинчен пĕтĕмпе те икĕ статья çеç пичетленĕ. «Стена хаçачĕн ĕçне лайăхлатмалла» ятлă пĕр статьи «Путиловка» колхозри стена хаçатне, «Хаçата ячĕшĕн çеç кăлараççĕ» ятлă тепĕр статьи Киров ячĕпе тăракан колхозри стена хаçатне критиклет. Малтанхи статьи апрелĕн 23-мĕшĕнче пичетленнĕ, анчах «Путиловка» колхозри парторганизаци хăйĕн стена хаçачĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн тунине вулакан районти хаçат страницинче паян кунччене курăймасть.

Элĕк районĕнчи «Колхоз хаçачĕ» апрельпе май уйăхĕсенче «Красная Чувашия», «Правда», Куйбышев ячĕпе тăракан колхозсенчи стена хаçачĕсен çитменлĕхĕсем çинчен виçĕ уйрăм статья пичетлесе кăларчĕ. Çав статьясенче палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе хаçат нимĕн те тумасть, стена хаçачĕсен паха опытне кăтартмасть.

Районти хаçатсем нумай çĕрте стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăманни çинчен çыраççĕ. Ку ĕнтĕ çак ĕç çине унти парторганизацисем çителĕклĕ çаврăнса пăхманни çинчен калать.

Районти хаçатсен хисеплĕ тивĕçĕ — стена хаçачĕсене тăтăшах пулăшса тăрасси. Редакцисен стена хаçачĕсем çинчен çутатас ыйтусене хăйсен планĕсене кашни уйăхрах кĕртмелле. Уйрăм стена хаçачĕсене тĕплĕн тишкермелле. Вĕсен паха пуçарăвĕсене хаçат урлă анлăн сармалла. Çитменлĕхсене уçăмлăн кăтартса, вĕсене мĕнле пĕтермеллине те вĕрентмелле.

Пурçăн хурчĕ ĕрчетекенсен канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта пурçăн хурчĕ ĕрчетекен бригадăсен бригадирĕсемпе звеньевойсен семинарĕ пулчĕ. Семинар хыççăнах Чăваш тата Мари АССР-ĕнчи пурçăн хурчĕ ĕрчетес ĕçре малта пыракансемпе специалистсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Пурçăн хурчĕ ĕрчетес енĕпе ĕçлекен Чăваш республикинчи кантур (вăл юман çулçипе тăранса пурăнакан пурçăн хуртне ĕрчетес ĕçе Чăваш, Мари, Пушкăрт АССР-сенчи, Новосибирск тата Горький облаçĕсенчи колхозсенче ертсе пырать) 1952 çулта кокон хатĕрлемелли государство планне 204,3 процент тултарнă. Пĕр килограмм гренăран кокон хатĕрлес плана 199,2 процент пурнăçланă.

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсем 1952 çулта коконсем хатĕрлемелли государство планне 221 процент тултарнă, государствăна 1951 çулхинчен 3,5 хут ытларах кокон панă. Кунта пĕр килограмм грена пуçне 431 килограмм кокон кăларнă. Çавăн пекех Мари республикинчи колхозсем коконсем хатĕрлемелли плана 149 процент тултарнă, кунта пĕр килограмм гренăран 275 килограмм кокон кăларнă.

Чăваш АССР-ĕнче юман çулçипе тăранса ӳсекен пурçăн хуртне ĕрчетес тĕлĕшпе 8 районти 24 колхозра ĕçлеççĕ. 1952 çулта коконсем хатĕрлемелли государство планне ытлашшипех тултарнă: Куславкка районĕ—275 процент, Муркаш районĕ—265 процент, Советски районĕ—233 процент, Çĕрпӳ районĕ—263 процент, Красноармейски районĕ—176 процент тултарнă. Чылай колхозсенче 3—5-шер килограмм грена тăрантарса ӳстерсе коконсем нумай хатĕрлерĕç. Çавна май колхозсен укçа тупăшĕ чылай ӳсрĕ. Красноармейски районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхозра 5 килограмм гренăна юман çулçипе тăрантарса кашни килограмран 482 килограмм кокон кăларнă, плана 222 процент тултарнă. Государствăна коконсем парса 57 пин тенкĕ тата 2,5 тонна тулă илнĕ. Муркаш районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхозра та 588 килограмм коконсем хатĕрлесе государствăна панă, 41 пин тенкĕ ытларах укçа тата 2,1 тонна тулă илнĕ.

Малта пыракан колхозсенче пурçăн хурчĕсене тăрантарса çитĕнтерес ĕçре агротехникăна тĕрĕс те вăхăтра пурнăçласа кашни килограмм гренăран 604—621 килограмм кокон кăларнă.

Çавăн пекех Мари АССР-ĕнче тата Новосибирск облаçĕнче те колхозсем пурçăн хурчĕ ĕрчетсе тупăш чылай илнĕ.

Анчах та юман çулçипе тăранса ӳсекен пурçăн хуртне ĕрчетес ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Пурçăн тумалли коконсен тухăçĕ хăпарать пулсан та унăн пахалăхĕ ӳсмест. Ку вăл пурçăн туса хатĕрлес ĕçе тивĕçлипе хакламаннинчен килет. Пур колхозсенче те пурçăн хуртне тăрантармалли юман вăрманĕсене йĕркелес ĕçе туса ирттермеççĕ тата хăшпĕр колхозсенче пурçăн хурчĕ ĕрчетме уйăрнă бригадăсен членĕсене час-часах улăштарса тăраççĕ. Колхозниксене планран иртерсе туса илнĕ коконшăн ӳстерсе тӳлемелли йĕркене пурнăçламаççĕ.

Канашлура Чăваш тата Мари республикисенчи пурçăн хурчĕ ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем 1953 çулта юман çулçипе тăранакан пурçăн хуртне ĕрчетсе коконсен тухăçлăхне хăпартассишĕн социализмла ăмăртăва хутшăнса обязательствăсем йышăнчĕç тата Воронеж облаçĕнчи пурçăн хурчĕ ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсене социализмла ăмăртăва чĕнчĕç.

Пурçăн хуртне тăрантарса ӳстерме апат вăхăтра хатĕрлесе тăрса тата пăхса ӳстерес ĕçе лайăх пурнăçласа пырса, 1953 çулта пĕр килограмм гренăран юман çулçипе тăрантарса Чăваш АССР-ĕнчи колхозсем 400 килограмм, Мари АССР-ĕнчи колхозсем 300 килограмм кокон туса илме йышăнчĕç.

Красноармейски районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхозри Н. Фомин бригадир пĕр килограмм гренăран 400 килограмм кокон туса илме йышăнса, Çĕрпӳ районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозра пурçăн хурчĕ ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсене ăмăртăва чĕнчĕ. Советски районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри Алексеев бригадир пĕр килограмм гренăран 600 килограмран кая мар кокон туса илсе хатĕрлев планне 200 процент тултарма пулчĕ. Ытти бригадирсем те нумайăшĕ кокон хатĕрлемелли плана икĕ хут ирттерсе тултарма, çав вăхăтрах кокон пахалăхне хăпартма, государствăна лайăх сортлă кокон пама обязательство йышăнчĕç.

Мари АССР-ĕн Горномари районĕнчи «Социализм» колхоз бригадирĕ Зачинова юлташ кашни килограмм гренăран 450 килограмм кокон туса илсе государство планне 150 процентран кая мар тултарма пулчĕ.

Александрова, Сырова, Герасимова агротехниксем хăйсем ĕçлекен колхозсенче пурçăн хуртне юман çулçипе тăрантарса çитĕнтерсе кокон хатĕрлемелли плана икĕ хутран кая мар тултарма йышăнса ытти районсенчи агрономсене те ăмăртăва хутшăнма чĕнчĕç.

Н. КОНДАКОВ,
Пурçăн хурчĕ ĕрчетес енĕпе ĕçлекен Чăваш кантурĕн управляющийĕ.

Выльăх-чĕрлĕх витисене лайăх тумалла

Çулсерен колхозсем выльăх-чĕрлĕх валли çĕнĕ çуртсем лартаççĕ. Республикăри колхозсем иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх витисем 700, чăх-чĕппе хур-кăвакал витисем 800 çĕнĕрен лартнă. Кăçал та çурт-йĕр строительствине пур колхозсенче те анлăн туса пымалла. Çакă вăл обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тĕп задачăсенчен пĕри пулса тăрать.

Выльăх-чĕрлĕх валли çурт-йĕр лартас ĕçре малта пыракан колхозсен опычĕпе усă курма тăрăшас пулать. Октябрьски районĕнчи «Звезда» колхоз лаша витисене кирпĕчрен тунă. Канаш районĕнчи «Канаш» колхоз ĕне, сысна, сурăх, чăх-чĕп витисене самантан туса лартнă. Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозра ĕне витисене кирпĕч юпасемпе тунă. Асăннă колхозсенче, çавăн пекех республикăри ытти чылай колхозсенче витесене пурне те типовой проектсем тăрăх тăваççĕ. Çав витесем нумай çул хушши çирĕп ларма пултараççĕ, вĕсенче выльăх-чĕрлĕхе пурăнма яланах типĕ, ăшă тата çутă.

Анчах та пирĕн колхозсенче кивелнĕ витесем те нумай-ха. Витесем лартас ĕçе пур колхозсенче те тивĕçлипе хакламаççĕ. Çĕнĕ витесем лартас, кивисене юсас ĕçе кирлĕ пек туса пымаççĕ. Нумай колхозсенче витесене питĕ начар, типовой проектсене пăхăнмасăр тăваççĕ. Элĕк, Вăрмар районĕсенчи колхозсенче, фермăсенчи çурт-йĕрсене типовой проектсене пăсса туса лартнă. Паллах, çавăн пек витесенче выльăхсене пурăнма кирлĕ условисем çителĕклĕ мар. Малашне çурт-йĕрсене вăхăтлăха лартас ĕçе пăрахăçламалла, выльăх витисене типовой проектсем тăрăх кăна тумалла.

Нумай колхозсем строительствăра ытти йăнăшсене те сахал мар тăваççĕ. Кунта эпир колхозсем витесем лартнă чухне час-часах тăвакан йăнăшсем çинчен каласшăн.

1952 çулта Советски районĕнче пурĕ 50 вите лартнă. Çав витесенче вентиляторсем пачах туман пулнă. Райсовет исполкомĕн строительство пайĕ çак çитменлĕхе асăрхаман. Тăвай, Комсомольски, Первомайски, Шăмăршă тата ытти районсенче те ялпа колхозсенчи строительствăна ертсе пыракан работниксем начар ĕçлеççĕ. Вĕсем çĕнĕрен лартакан е тĕпренех çĕнетсе юсакан витесенче тислĕк шĕвекĕ юхса тăмалли канавсем, çак шĕвексем юхса пухăнмалли шăтăксем тума кирлине асăрхаттармаççĕ. Асăннă районсенче колхозсен витисенче çавăн пек канавсемпе шăтăксем пачах çук. Çавăнпа ĕнтĕ выльăх витисенче хĕллехи вăхăтра нӳрĕ, йывăр сывлăш тăрать, тислĕк шĕвекĕ вите урайне çĕртет, тасамарлантарать, аммиак шăршине шăршласа пурăннипе выльăхсем начарланаççĕ.

Строительство ĕçĕнчи тепĕр пысăк çитменлĕх вăл çуртсене улăмпа витни пулать. Иртнĕ çулта Канаш районĕнчи «Красное пламя», «Красный Октябрь», «Коминтерн» тата ытти чылай колхозсем 4—5-шер витесем çĕнĕрен лартрĕç. Çав витесене пурне те улăмпа витнĕ. Кунашкал тĕслĕхсем Канаш районĕнче кăна мар. Улăмпа витнĕ çуртсем ытти районсенчи колхозсенче те нумай. Улăмпа витнĕ çурт çийĕ начар, çирĕп мар. Çавна пула чылай колхозсем пысăк тăкаксем тӳсеççĕ. Витесене улăма тăмпа хутăштарса витме пулать. Çавăн пек тусан, çурт çийĕ 15 çул хушши лайăх чăтма пултарать. Вăл вут-кăвартан та хăрамасть.

Малашне выльăх витисене улăмпа мар, черепицăпа, тăмпа хутăштарнă улăмпа, турнаспа витес пулать. Вĕсемпе витни улăмпа витнинчен темиçе хут йӳнерех ларать.

Çурт-йĕрсем лартас ĕçĕн хакне йӳнетес ыйту—строительсем умĕнче яланах тăракан задача. Юлашки çулсенче пирĕн колхозсем вырăнти материалсемпе анлăрах усă курма пуçларĕç. Сăмахран, иртнĕ çулта республикăри 29 районта колхозсем выльăх витисене саман кирпĕчрен лартрĕç. Вăл çуртсем йывăç витесенчен нумай йӳне ларчĕç. Саман кирпĕчрен лартнă витесем час çĕрмеççĕ, вут-кăвартан та вĕсем хăрушă мар. Анчах витесене саман кирпĕчрен лартнă чухне те пирĕн йăнăшсем сахал мар пулнă. Техника кăтартăвĕсене пурнăçласа пыман тĕслĕхсем нумай. Сăмахран, Канаш районĕнче Маленков ячĕпе тăракан колхозра саман кирпĕчрен тунă кайăк-кĕшĕк вити малтанхи çулах пĕр еннелле чалăшса кайнă. Çакă вăл, нимрен те мар, вите стенисене йĕпе çанталăкра купаланăран тата çивиттине вăхăтра витменрен пулнă. Çак районтах, Микоян ячĕпе тăракан колхозра çулла саман кирпĕче кая юлса хатĕрленĕ. Кирпĕч çумăр айĕнче нумай вăхăт хушши йĕпенсе выртнă, юлашкинчен вăл юрăхсăра тухнă. Çапла кирпĕч çапса расходланă 550 ĕçкунĕ ним усăсăрах пĕтнĕ. Ĕçе çакнашкал япăх йĕркеленĕ тĕслĕхсем Йĕпреç, Пăрачкав, Первомайски, Ишлей тата ытти районсенче те пулнă. Кун пек йăнăшсене кăçал тумалла мар. Витесене саман кирпĕчрен июль уйăхĕнчен кая юлмасăр туса лартмалла. Стропилăсене стенасене купаланă вăхăтрах е маларах та туса хатĕрлес пулать.

Выльăх-чĕрлĕх валли силос, тымарçимĕçсем, çĕрулми тата ытти апат çултан-çулах нумайрах хатĕрлемелле пулать. Çав апатсене типтерлĕ тытса усрама фермăсенче уйрăм çурт-йĕрсем çителĕклĕ пулмалла. Малашне ĕнтĕ силос массине тăпрана нимĕнпе те çирĕплетмен шăтăксене хывас ĕçе пăрахăçа кăлармалла. Силос хывма башньăсемпе çурма башньăсем, е стенисемпе тĕпне цементпа, кирпĕчпе çирĕплетнĕ шăтăксем тумалла. Пирĕн республикăра ку тĕлĕшпе те чылай колхозсен паха опыт пур.

Вăрнар районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз кирпĕчрен 50-шар тонна кĕмелĕх силос башнисем тунă. Шăхасан районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта силос хывма шлакоблокран икĕ шăтăк тунă. Çав шăтăксенче силос лайăх тăнине кура, колхоз кăçал тата икĕ шăтăк тума палăртнă. Халĕ шлак тата цемент илсе хунă. Силос хывмалли сооруженисем тума халех тытăнмалла. Çуллахи кунсем хăвăрт иртсе пыраççĕ. Силос культурисем кăçех çулмалла пулса çитеççĕ. Тымарçимĕçсемпе çĕрулми хранилищисене те халех юсамалла, çĕнĕрен туса хатĕрлемелле. Колхозсенчи строительствăна ертсе пыракан работниксен, колхоз правленийĕсемпе строительство бригадисен ĕçне лайăхрах йĕркелесе ертсе пымалла. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли паха çурт-йĕрсем çителĕклĕ пулмалла.

Инженер И. КУЗЬМИН.

КАНАДА КАМ АЛЛИНЧЕ?

Партин XIX-мĕш съездĕнче Центральнăй Комитетăн ĕçĕсем çинчен тунă отчетлă докладра Г. М. Маленков юлташ çапла каларĕ: «Англие унăн пĕр тăшманĕ те, Америка «тусĕ» кÿнĕ пек, пысăк сиен кÿмен, унтан импери пайĕсене пĕрин хыççăн теприне туртса илмен».

Америка империализмĕ Британи владенийĕсене кĕрсе пынине уççăн кăтартса паракан факт Канада пулса тăрать. Ку çĕршывра экономикăри чи пăлтă вырăнсене Уолл-стрит хăй аллине ярса илнĕ.

Канада Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе юнашар вырнаçнă, унта çутçанталăк пуянлăхĕсем питĕ нумай. Вăл никель, платина, ради, асбест тупас тĕлĕшпе капитализмла государствăсем хушшинче пĕрремĕш вырăнта, алюмини, ртуть тата молибден тупас тĕлĕшпе иккĕмĕш вырăнта тăрать, уран, пăхăр, цинк, кĕмĕл, мышьяк тупас тата магни тăвас тĕлĕшпе те малти вырăнсенчен пĕрне йышăнать. Çавнашкалах Канадăра тимĕр рудипе нефть нумай вырăнсем те пур.

Анчах çутçанталăк пуянлăхĕсен чи пысăк пайне ют çĕршыв капиталĕ, пуринчен ытла, Америка капиталĕ ярса илнĕ. «Пирĕн пĕтĕм промышленноçăн, рудниксен, чугун çулсен, общество усă куракан предприятисен вăтăр çичĕ процентне американецсем тытса тăраççĕ е Америка капиталĕ контроль туса тăрать,—тесе çырнă Торонтăра тухса тăракан «Канадиен Трибюн» хаçат.—Тĕслĕ металсем—никель, алюмини, пăхăр, цинк, титан, хура тăхлан тата ытти металсем туса хатĕрлессине 72 процент таран, нефть кăларассине 65 процент таран США монополийĕсем хăйсен аллине ярса илнĕ».

Нумай çул хушши пыракан хаяр кĕрешÿре Америка капиталĕ, Англи капиталĕнчен вăйлăрах пулнă пирки, Канадăра акăлчансене хытă хĕсрĕ. 1914 çулта Канадăра ют çĕршывсем хывнă пĕтĕм капиталтан 71 проценчĕ Англи капиталĕ пулнă пулсан, США тÿпине пĕтĕмпе те 25 процент çеç тивнĕ пулсан, 1952 çулта вара, Америкăра тухакан «Уолл-стрит джорнэл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, США Канадăри предприятисене хывнă капитал ют çĕршывсем хывнă пĕтĕм капиталăн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне ытла йышăннă, сакăр миллиард доллара çитнĕ. Канадăра Англи хывнă капитал халĕ ют çĕршывсем хывнă пĕтĕм капиталăн пилĕк пайĕнчен пĕр пайĕ чухлĕ кăна юлнă, вăл 1,8 миллиард доллара яхăн пулать.

Америкăри капиталистсем Канадăра экономика тĕлĕшпе нумай çăмăллăхсем илнĕ. Çав çăмăллăхсем вĕсене çĕршыва эксплуатацилеме пулăшаççĕ. США-ри капитал хуçисен органĕ «Бизнес уик» журнал нумаях пулмасть уççăнах çапла çырчĕ: «Америкăри компанисем нумайăшĕ Канадăна Пĕрлешÿллĕ Штатсен пĕр пайĕ тесе шутлаççĕ. Ку çĕршыва капитал хывни ытти çĕршывсене капитал хывнинчен шанчăклăрах, теççĕ вĕсем».

Чăнах та, Америкăра тухакан «Мегэвин оф Уолл-стрит» журнал пĕлтернĕ тăрăх, Канадăра хальхи вăхăтра Америкăри концернсен е предприятисен уйрăмĕсем пулса тăракан компанисем 2,5 пин ытла шутланаççĕ, вĕсене Америка капиталĕ контроль туса тăрать. Çав предприятисен хуçисене Канада халăхĕ калама çук пысăк хырçă тÿлесе тăрать, урăхла каласан, çав предприятисем калама çук пысăк усламсем илсе тăраççĕ, çав услам США-на куçать е Канадăра хывакан Америка капиталне малалла ÿстерме каять. Вăл услам çулталăкра 400 миллион доллара çитет.

Вăрçă хыççăн Канадăн экономика тĕлĕшпе ирĕксĕрех США-па чылай килĕшÿсем тумалла пулчĕ, çав килĕшÿсем çĕршывăн халăх хуçалăхне пĕр енĕпе çеç аталанас çул çине тăратаççĕ. Америка промышленноçне кирлĕ чĕртавар тупас ĕçе пур майсемпе те вăйлатса пыраççĕ, çав чĕртавартан продукци туса кăларма пултаракан хăйсен çĕршывĕнчи промышленноçа аталанма чарса тăраççĕ. Канада ĕлĕкхи пекех ют çĕршывсенчен, пуринчен ытла Америкăран, таварсем илсе тăрать.

Çавнашкал хуçалăх «политики» Канада экономикине аркатмасăр тăма пултараймасть. Вăл, паллах, çĕршыва экономика енчен ытларах та ытларах хăй кÿршине пăхăнса тăракан тăвать.

Акă пĕр-икĕ тĕслĕх илер.

Канадăн нефть питĕ нумай. Анчах вăл Америкăран бензин сутăн илсе кашни çулах çĕршер миллион доллар пĕтерет. Канадăра тимĕр тăпри тата çĕр кăмрăкĕ тухакан çав тери пуян вырăнсем пур, анчах унăн металпа çĕр кăмрăкне США-ран кÿрсе тăма тивет.

«Пирĕн экономикăна аталанма Америкăри шултра трестсем чарса тăраççĕ, вĕсем пирĕн рабочисене США промышленноçĕ валли вăрман кастараççĕ, руда кăларттараççĕ, — тенĕ Канадăри рабочисен прогрессивлă партийĕ 1952 çулта йышăннă программăра. — Пирĕн ресурссене Америкăри монополисем контроль туса тăнине пула пирĕн промышленноçа ÿсме пĕрмаях тата юриех чарса тăраççĕ, çав монополисем пирĕн ресурссене чĕртавар туса США-на илсе каяççĕ, унтан, хатĕр таварсем туса, хаклă хакпа сутма каялла Канадăна илсе килеççĕ. Миллионшар доллар, хамăр промышленноçа ÿстерме каяс вырăнне, услам пулса США-на куçать».

Америка империалисчĕсем Канадăн тулашри суту-илĕвне те хăйсене пăхăнтарнă. США-па Канада хушшинчи тавар çаврăнăшĕ халĕ Канадăн тулашри суту-илĕвĕн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне йышăнать. Канада рынокĕнчен Англи таварĕсене хĕссе кăларса, Америка промышленникĕсем унта США-ра сутăнман калама çук нумай продукцие çăмăллăн вырнаçтарса тăраççĕ. Иртнĕ çул Канадăна ют çĕршывсенчен кÿрсе пынă таварсенчен 70 проценчĕ Америка таварĕсем пулнă.

США империалисчĕсем Канадăна хăйсен агрессиллĕ ĕçĕсене хутшăнтарчĕç. Çĕршыв территоринче Америка стратегилле базăсем, çулсем, аэродромсем тăвать. Арктика районĕнче, çăмахран, метеорологи тата радиолокаци станцисем лартнă, Черчилль портĕнче, Эдмонтра тата çурçĕрти ытти пунктсенче Арктика условийĕсенче çарсене вĕрентмелли тата хĕçпăшалсене сăнамалли центрсем тунă. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем Канадăна хăйсен çарĕсене илсе пынă, чăннипе çĕршывăн чылай районĕсене оккупациленĕ.

Вашингтонран хушнă тăрăх, Канадăра власра тăракан ушкăнсем хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсене Корейăна ячĕç, çĕршыва агрессиллĕ Сурçĕр-Атлантика блокне кĕртрĕç, çав тери васкаса хĕçпăшал туса кăларма пуçларĕç.

Ку факт Канада халăхĕшĕн мĕне пĕлтернине кăтартса пама çакна асă илтермелле: кăçалхи финанс çулĕнчи бюджетра çар валли каякан расходсем пĕтĕм расход пайĕн 53 процентне йышăнаççĕ. Кунсăр пуçне, ытти статьясем тăрăх çар валли çĕршер миллион доллар параççĕ.

Çĕршыва хĕçпăшаллантарни ĕçсыннин массисен пурнăçне начарлатать. Апатсимĕçпе промышленность таварĕсен хакĕсем ÿсеççĕ. Граждансла промышленность чакать, ĕçсĕрлĕх ÿсе пырать.

Пĕрлешÿллĕ Штатсем Канадăна экономика енчен пусмăрлани ăна политика тĕлĕшпе пăхăнтарасси патне илсе пырать. Америка реакцийĕ хĕснипе Канадăра власра тăракан ушкăнсем çĕршывра фашистла йĕркесем тăваççĕ. Çĕршывра террор вăйланса пырать, прогрессивлă организацисене час-часах тапăнаççĕ. Америкăран пример илсе, Канада полицийĕ рабочисемпе служащисен «шанчăклăхне» тĕрĕслет, çавна пула малта пыракан çынсем ĕçсĕр тăрса юлаççĕ.

Вашингтонран кăтартса панă тăрăх Канада парламенчĕ Канада çынни кам пулма пултарни çинчен калакан закона тÿрлетнине йышăннă, çакă ĕнтĕ реакцие хăйне килĕшмен патриотсене, «çĕршыва кăмăлламасть» е «сăтăрлă ĕçсем тăвать» тесе, граждан прависемсĕр хăварма май парать.

Канада правительстви çавнашкалах уголовнăй кодекса улăштарма парламента сĕнÿ панă. Çак закон проекчĕ полици йĕркисене вăйлатать, халăх прависене хĕсет. Ĕçсыннисемшĕн вăл пысăк хăрушлăх пулса тăрать.

Тĕнчери иккĕмĕш вăрçă хыççăн Канадăра власра тăракан ушкăнсем чылай законсем йышăннă. Çав законсем доминион пулса тăракан Канадăпа Британи империйĕ хушшинчи çыхăнусене вăйсăрлатнă.

Çакăн хыççăн, паллах ĕнтĕ, Англи империалисчĕсем Канадăра хăйсен влиянийĕ начарланнă пирки ытла та хыпăнса ÿкнĕ. Вĕсем кунта хăйсен экономикăлла позицисене пур майсемпе те сыхласа хăварма тăрăшаççĕ. Премьер-министр Черчилль тата Британи империйĕн ĕçĕсен министрĕ Исмэй юри Канадăна пырса кайнă. Канадăри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, вĕсем тĕнчери иккĕмĕш вăрçă хыççăн Канадăпа Англи хушшинче пулса юлнă «çурăксене питĕресшĕн» пулнă.

Черчилльпе Исмэй хыççăн Канадăна ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден, ют çĕршыв ĕçĕсен государство министрĕ Ллойд, оборона министрĕ Александер, финанс министрĕ Батлер тата Англири ытти государство деятелĕсем тата ĕçлĕ çыннисен представителĕсем пырса кайнă. Вĕсем пурте Канадăпа Великобритани хушшинче экономикăпа политика енчен тачăрах çыхăну тытас ĕçе йĕркелесе яма тăрăшнă.

Америкăри монополистсем Канада экономикинче чи паллă позицисене ярса илнĕ. Вĕсем, паллах, çав позицисене парасшăн мар. Англи çак доминионра ĕлĕкхи пек пуç пулса тăма темĕн чухлĕ тăрăшсан та, ку вăл икĕ империализмла пысăк çĕршыв хушшинчи хирĕçÿсене вăйлатнăçем вăйлатса пырĕ.

С. ЩЕРБАТЫХ.

Румынири ялсенчи коллективлă хуçалăхсенчи малта пыракансен пĕрремĕш съезчĕ

БУХАРЕСТ, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Румынири ялсенчи коллективлă хуçалăхсенчи малта пыракансен пĕрремĕш съезчĕ хăйĕн ĕçне вĕçленĕ. Примерлă устав проекчĕ çинчен тунă доклад тăрăх пренире 17 çын тухса каланă. Делегатсем примерлă устава пĕр шухăшлă пулса ырланă, Министрсен Советĕнчен ăна çирĕплетме ыйтса резолюци йышăннă.

Съездăн каçхи ларăвĕнче Румынири рабочисен партийĕн Центральнăй Комитечĕн генеральнăй секретарĕ тата Румыни Халăх Республикин Министрсен Совечĕн председателĕ Г. Георгиу-Деж сăмах тухса каланă. Делегатсем ăна тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ.

Георгиу-Деж юлташ сăмах каланă чухне делегатсем Румыни Халăх Республикине, Румынири рабочисен партине, Румыни правительствине, аслă Совет Союзне чысласа темиçе хутчен те алă çупнă.

Юлашкинчен резолюци йышăннă. Резолюцире çапла каланă: Георгиу-Деж хăйĕн сăмахĕнче Румынири рабочисен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Румыни правительствин кăтартăвĕсем çинчен каласа пачĕ. Съезд çак кăтартусене пурнăçа кĕртесси çинчен пĕр шухăшлă пулса решени йышăнать. Съезд ялхуçалăхне социализмла улăштарса çĕнетес, рабочи класпа ĕç хресченĕсем хушшинчи союза тĕреклетес, Румынири халăх демократи стройне тĕреклетес тĕлĕшпе çав кăтартусем тăрăх ĕçлесе пыма пулать.

Венăра Пĕтĕм тĕнчери врачсен конгресĕ уçăлнă

ВЕНА, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Венăра Пĕтĕм тĕнчери врачсен конгресĕ уçăлнă. Конгресс задачи вăл пурнăçăн ку чухнехи условийĕсене тĕпчесе вĕренесси тата çак условисем халăх сывлăхĕ çине мĕнле влияни панине палăртасси пулать. Конгреса Францирен, Италирен, Англирен, Совет Союзĕнчен, Германирен, Китайран, Бельгирен, Алжиртан, Польшăран, Бразилирен, Чехословакирен, Японирен, Болгарирен, Австрирен тата ытти çĕршывсенчен медицинăн паллă деятелĕсем 200 çын ытла пынă.

Конгресс кун йĕркинче çакăн пек ыйтусем тăраççĕ:

1. Пурнăç условийĕсем халăх сывлăхĕ çине паракан влияни.

2. Вăрçă халăх сывлăхĕ çине паракан влияни.

3. Çакăнта кăтартнă ыйтусенчен медицина деятелĕсем умне тухса тăракан тивĕç.

Конгресра пĕтĕмпе 10 доклад ытла пулать.

Конгреса унăн хисеплĕ председателĕ, Вена университечĕн невро-психиатрически клиникин профессорĕ Стронский кĕске сăмах каласа уçнă.

ИТАЛИ ВЛАÇĔСЕМ ОППОЗИЦИЛЛЕ ПАРТИСЕНЕ СУЙЛАВ УМЕНХИ ПРОПАГАНДА ТУМА ЧАРАÇÇĔ

РИМ, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Унита» хаçат çапла пĕлтерет: правительство влаçĕсем оппозицилле партисен ораторĕсем тухса калакан митингсене салатса яма тăрăшаççĕ. Сăмахран, полици Оратора тата Виганеллора (Витебро провинцийĕ), Монтелонгора тата Монтечильфонра (Камнобассо провинцийĕ), Петилиа-Поликастрора (Катандзаро провинцийĕ) пулнă митингсене хăваласа салатнă. Çак митингсенче тухса каланă коммунистсемпе социалистсем хальхи правительствăна «реакцилле» правительство тенĕ, вăл ют çĕршыв империализмĕпе çыхăнса ĕçленине кăтартса панă. Темиçе оратора арестленĕ. Реджо-Калабриа провинцийĕнче 6 митинга хăваласа салатнă. Ку митингсенче коммунистсем, социалистсем тата Италири демократилле союз членĕсем тухса каланă пулнă.

Çакăн пек законсăр ĕçсем пулса иртнĕ вырăнсенче пур çĕрте те оппозицилле партисен представителĕсем полицейскисене хирĕç судра ĕç пуçарнă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче нимĕнле улшăнусем те пулман. Вырăнти пĕлтерĕшлĕ çапăçусем пулса иртнĕ.

Ĕнер çĕрле Америка самолечĕсем Кăнтăр Пхенаи провинцийĕнчи Мундек уездĕнчи мирлĕ ялсем çине çĕнĕрен тапăннă, бомбăсем пăрахнă. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай, уйрăмах ачасем нумай вилсе тата аманса пĕтнĕ. Пурăнмалли суртсемпе землянкăсене нумай ишĕлтерсе пĕтернĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем паян тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ, 4 самолетне сиенленĕ.

ПХЕНЬЯН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче пур фронтсенче те пĕчĕк çапăçусем пулса иртнĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем паян тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ, 6 самолетне сиенленĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ КОРЕЙĂРИ МИРЛĔ ХУЛАСЕМПЕ ЯЛСЕМ ÇИНЕ ТАПĂННĂ

ПХЕНЬЯН, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕ Çурçĕр Хамген провинцийĕнчи районсем çине çаплах бомбăсем пăрахма чарăнмасть. Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка самолечĕсем майăн 19-мĕшĕнче Ехда тата Хватэ ялĕсем çине тапăннă, 200 ытла бомба пăрахнă. Çав кунах Америка самолечĕсем çак ялсем çине пулеметсенчен пенĕ. Майăн 20-мĕшĕнче Америка самолечĕсем Кимчак хулипе унăн таврашĕнчи ялсем çине бомбăсем пăрахнă.

«НЕЙЕС ДЕЙЧЛАНД» ХАÇАТ ХĔВЕЛАНĂÇ БЕРЛИНРА ВĂРÇА ХАТĔРЛЕННИ ÇИНЧЕН ÇЫРАТЬ

БЕРЛИН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Нейес Дейчланд» хаçат Хĕвеланăç Берлинра вăрçа хатĕрленни çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Хаçат çапла çырать: историре нихçан та Берлинра хулан Хĕвеланăç секторĕсенче казармăсемпе боеприпас склачĕсем хальхин пек нумай пулман. Хĕвеланăç Берлин влаçĕсем çар расхочĕсене халăх çине йăвантараççĕ. Бонри финанс министрĕ Шеффер бундестагра каланă тăрăх, Хĕвеланăç Германипе Хĕвеланăç Берлинра кашни икĕ маркаран пĕр марка укçа çĕнĕрен хĕçпăшалланма каять.

«Нейес Дейчланд» хаçат çапла çырать: Грюневальдра Америка валли бетонран шоссе çулĕ хывса расход кăларнă укçапа икĕ пÿлĕмлĕ 250 хваттер тума май пулнă. Хĕвеланăç Берлинра Америкăн оккупаци çарĕсем кăна 6 казарма йышăнаççĕ. Вест-Лихтерфельдри «Рузвельт-баракс» казарминче Америка çарĕсемпе пĕрле Хĕвеланăç Германи çарĕн подразделенийĕсене те вырнаçтарнă.

Англин оккупаци çарĕсен нумай казармисем Шпандаура вырнаçнă. Хĕвеланăç Берлинри, Рейникендорф районĕнчи пысăк казармăсенче Францин оккупаци çарĕсем тăраççĕ.

Казармăсем çывăхĕнче пур çĕрте те боеприпассен пысăк склачĕсем пур.

«Нейес Дейчланд» хаçат çырнă тăрăх, Хĕвеланăç Берлинра иртернĕ çар маневрĕсем халăха пысăк сиен кÿнĕ. Англи çарĕсем иртнĕ уйăхра маневр иртернĕ чухне пушар тухнă Грюневальдри Ростенфен заповедникĕ пĕтĕмпех пĕтнĕ.

Совет морякĕсем Швеци пăрахучĕсене пулăшни

СТОКГОЛЬМ, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă тинĕс районĕнче пăрсем хушшине пулнă Швецин суту-илÿ пăрахучĕсене совет морякĕсем вăхăтра пысăк пулăшу панăшăн Швеци хаçачĕсем тав туса çыраççĕ.

Швецин виçĕ пăрахучĕ: «Хедера», «Норма», «Тритон» пĕр эрне хушши Архангельскран 150 мильăра куçса çÿрекен пăрсем хушшинче пулнă.

Совет Союзĕн пăрçĕмĕрен пăрахучĕсем пăрсем хушшинчен ăнăçлăн кăларнă хыççăн, Швеци пăрахучĕсем халĕ Архангельск патне çул тытаççĕ.

МУНИЦИПАЛИТЕТ СОВЕТНИКĔ ПУЛМА СУЙЛАНĂ АНРИ МАРТЭН МАНДАТНЕ ПĂРАХĂÇА КĂЛАРМАЛЛА ТУНĂ

ПАРИЖ, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Луара департаментĕнчи префектура совечĕ Францири паллă патриота Анри Мартэна муниципалитет советникĕ пулма суйланине тĕрĕс мар тесе йышăннă. Анри Мартэн хальхи вăхăтра тĕрмере ларать. Хаçат кăтартса панă тăрăх, префектура совечĕн ларăвĕнче Филюэлс председатель пулнă. Вăл Виши правительствин службинче тăнă.

ГИТЛЕР «ДОБРОВОЛЕЦĔСЕМ» «ЕВРОПА ÇАРНЕ» КĔРЕÇÇĔ

КОПЕНГАГЕН, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Берлингске тиденде» хаçат корреспонденчĕ Бонран çапла пĕлтерет: «Европа çарĕ» тенĕскерне кĕртме хатĕрленекен Хĕвеланăç Германи çарĕн списокĕсене халех ĕнтĕ 70 пин ытла «доброволец» хушаматне кĕртнĕ. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвеланăç Германи çарне кĕме заявлени панисенчен 80 проценчĕ Гитлер çарĕнче пулнă çынсем.

АФГАНИСТАНРА ТАВАР ХАКĔСЕМ ÿСНĔ

КАБУЛ, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Анис» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, юлашки кунсем хушшинче Кабул хулинче ашкакай хакĕ 30—40 процент ÿснĕ.

Бокс енĕпе Европăра мала тухассишĕн пулнă ăмăрту

ВАРШАВА, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян бокс енĕпе Европăра мала тухассишĕн пынă ăмăртура юлашки тĕлпулусем пулнă.

Чи çăмăл виçеллисен ăмăртăвĕнче Кукер (Польша) Майдлеха (Чехословаки) çĕнтернĕ. Çăмăлтарах виçеллисен ăмăртăвĕнче Стефанюк (Польша) Степанова (СССР) çĕнтернĕ. Сурма çăмăл виçеллисен ăмăртăвĕнче Кружа (Польша) Засухина (СССР) çĕнтернĕ. Çăмăл виçеллисен ăмăртăвĕнче Енгибарян (СССР) Юхаша (Венгри) çĕнтернĕ. Пĕррремĕш сурма вăтам виçеллисен ăмăртăвĕнче Дрогош (Польша) Миллигена (Ирланди) çĕнтернĕ.

Иккĕмĕш сурма вăтам виçеллисен ăмăртăвĕнче Хихла (Польша) çĕнтернĕ. Вăл Щербаковпа (СССР) тĕл пулнă.

Пĕрремĕш вăтам виçеллисен ăмăртăвĕнче Уэльс (Англи) Реша (Хĕвеланăç Германи) çĕнтернĕ.

Иккĕмĕш вăтам виçеллисен ăмăртăвĕнче Вемхомнер (Хĕвеланăç Германи), Коутная (Чехословаки) çĕнтернĕ.

Сурма йывăр виçеллисен ăмăртăвĕнче Ницке (Демократиллĕ Германи Республики) Гжеляха (Польша) çĕнтернĕ.

Йывăр виçеллисен ăмăртăвĕнче Шоцикас (СССР), Венгжиняка (Польша) çĕнтернĕ.

Командăсен ăмăртăвĕнче: Польша — пĕрремĕш, СССР — иккĕмĕш, Хĕвеланăç Германи — виççĕмĕш вырăн йышăннă. Англипе Чехословаки тăваттăмĕш вырăна тухнă.

Совет боксерĕсем Енгибарянпа Шоцикас ылтăн медальсем тата Европа чемпионĕ ятне илнĕ. Совет боксерĕсем Степанов, Засухин тата Щербаков кĕмĕл медальсем илме тивĕçлĕ пулнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ултă автономиллĕ республикăсенчи çăмăл атлетсен Шупашкарта пулса иртнĕ ăмăртăвĕнче ситĕнÿ тунă спортсменкăсем. Сулахайран сылтăмалла — Е. Мишенькина, И. Антонова тата Л. Емельянова. Вĕсем 400 метр чупмалли ăмăртура мала тухнă.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Баскетбол енĕпе Европăра мала тухмалли ăмăрту

Майăн 24-мĕшĕнче Мускавра, «Динамо» спорт обществин центральнăй стадионĕнче арçынсен командисен баскетбол енĕпе Европăра мала тухассишĕн пыракан ăмăрту пуçланнă. Ăмăртăва 17 çĕршыв: Бельги, Болгари, Венгри, Германи, Дани, Египет, Израиль, Итали, Ливан, Румыни, СССР, Финлянди, Франци, Чехословаки, Швейцари, Швеци тата Югослави командисем хутшăнаççĕ.

...Стадиона уяв чухнехи пек илемлетнĕ. Хĕвеланăçĕнчи трибуна умĕнче 17 çĕршывăн государство ялавĕсем. Мускаври вуншар пин çынсем стадионри трибунăсем çинчи вырăнсене йышăннă.

Кăнтăрла 12 сехет. Фанфарăсем янраççĕ. Марш кĕвви кĕрлесе каять. Ăмăрту участникĕсем тухаççĕ те хĕвеланăçĕнчи трибуна умне йĕркеленсе тăраççĕ. Курма пынисем вĕсене тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Хăнасене саламласа, ăмăрту иртterme уйăрнă организацилле комитетăн председателĕ И. Виресков сăмах калать.

Ун хыççăн Пĕтĕм тĕнчери баскетбол федерацийĕн генеральнăй секретарĕ В. Джон господин сăмах калать. Вăл çапла каланă:

— Мускав пире пурне те хăйĕн тусĕсене кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илчĕ. Вăл пире пурне те тăванла йышăнчĕ. Кунта пухăннă мĕнпур баскетболистсен ячĕпе, Пĕтĕм тĕнчери баскетбол федерацийĕн ячĕпе эпĕ пĕтĕм чĕререн Мускава, çавăн пекех тата Совет Союзĕн баскетбол секцине тав тăватăп.

Ăмăрту ялавне çĕклемелли хисеплĕ тивĕçе СССР команди — баскетбол вăййипе 1951 çулта Европа чемпионĕ пулса тăнă команда илет. СССР государство гимнне каланă вăхăтра совет командин капитанĕ О. Коркия пирĕн Тăван çĕршывăн хĕрлĕ ялавне мачта çине хăпартать.

Ăмăрту пуçланни çинчен пĕлтереççĕ. Мускав шкулĕсенче вĕренекен хĕрачасем баскетбол командисен капитанĕсене чечек çыххисем параççĕ.

Баскетбол площадки çинче малтанах Румынипе Итали командисем выляççĕ. Итали спортсменĕсем çĕнтереççĕ.

Израиль команди Финлянди командине çĕнтерет. Болгари спортсменĕсем Ливан командине çĕнтереççĕ.

Совет Союзĕн командипе Бельги баскетболисчĕсем хушшинчи вăйă пысăк интереспа иртет. Малтанхи минутсенчех пуçарăва совет спортсменĕсем хăйсен аллине илеççĕ. Вĕсем хăвăрттăн атака туни куракансене питĕ тĕлĕнтерет. Вăйă СССР команди 59:31 шутпа çĕнтернипе вĕçленет.

Пĕр вăхăтрах вăйăсем «Динамо» стадионĕн теннис площадкинче пулса иртеççĕ. Венгри команди Дани командине çĕнтерет. Чехословаки баскетболисчĕсем Швейцари спортсменĕсене çĕнтереççĕ. Германипе Швеци хушшинчи вăйă Германи баскетболисчĕсем çĕнтернипе вĕçленет.

Баскетбол енĕпе Европăра мала тухассишĕн унччен, майăн 23-мĕшĕнче, икĕ тĕлпулу пулнă. Югослави команди Ливан командине çĕнтернĕ. Болгари баскетболисчĕсем Финлянди командине çĕнтернĕ. (ТАСС).

ФУТБОЛ

Республика кубокне илессишĕн

Футбол вăййипе республика кубокне илессишĕн пыракан ăмăрту майăн 17-мĕшĕнче пуçланчĕ. Çак ăмăртăва кăçал пурĕ 36 команда хутшăнса вылять.

Иртнĕ вырсарникун «Молния» спорт обществи стадионĕнче республика кубокне илессишĕн виçĕ вăйă пулса иртрĕ. Чи малтанах Шупашкарти «Динамо» спорт обществин футбол команди Красноармейски районĕн сборнăй командипе тĕл пулчĕ. Динамовецсем çак вăйăра хăйсен ăсталăхне лайăх кăтартрĕç. Вăйă 11:0 шутпа динамовецсем çĕнтернипе вĕçленчĕ.

Ун хыççăн иртнĕ çул футбол вăййипе республика кубокне çĕнсе илнĕ «Молния» спорт обществин команди Шупашкарти «Спартак» спорт обществин иккĕмĕш командипе вылярĕ. Стадион хуçисем 5:2 шутпа çĕнтерчĕç.

Каçхине 6 сехетре «Спартак» спорт обществин пĕрремĕш команди Канашри чугун çул узелĕн футбол командипе тĕл пулса вылярĕ. Спартаковецсем вăйă пуçламăшĕнчех вăйлă тапăнса выляса пĕр мечка тапса кĕртрĕç. Пĕрремĕш тайм 3:0 шутпа вĕçленчĕ. Иккĕмĕш таймра Канаш футболисчĕсем тăрăшарах выляма тытăнчĕç. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, вĕсем пĕр мечка 11 метртан тапса кĕртрĕç. Ун хыççăн канашсен нападенире вылякан футболисчĕсем татах та вăйлăрах выляма тытăнчĕç, анчах урăх пĕр мечка та тапса кĕртеймерĕç. Вăйă 3:1 шутпа спартаковецсем çĕнтернипе пĕтрĕ.

* * *

Çав кунах футбол вăййипе республика кубокне илессишĕн Çĕрпÿри «Красное знамя» спорт обществин футболисчĕсем Чапаевски поселокри футбол командипе тĕл пулса вылярĕç. Çав команда икĕ çул умлă-хыçлă республика чемпионĕн ятне çĕнсе илнĕ. Стадион хуçисем 3:1 шутпа çĕнтерчĕç.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — вырăсла спектакльсем: майăн 26-мĕшĕнче «Вей, ветерок», майăн 27-мĕшĕнче «Твое личное дело». Спектакльсем 20 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«РОДИНА»—майăн 26-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Суворов», 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче «Случай на ярмарке».

«УДАРНИК»—майăн 26-мĕшĕнче илемлĕ фильм «Два бойца».

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

«Союзпечет» уйрăмĕсенче, кашни почтăра хаçат çырăнса илме пулать. Письмоносецсем гражданисен килĕсенче, хаçат-журнал сарма уйăрнă çынсем — фабрикăсемпе заводсенче, учреждениченче, шкулсенче, колхозсенче тата МТС-сенче хаçат илсе тăма çырăнтараççĕ.

ХАÇАТ ХАКĔ:
1 çулталăка—52 тенкĕ те 20 пус;
6 уйăха —26 тенкĕ те 10 пус;
3 уйăха —13 тенкĕ те 0,5 пус;
1 уйăха — 4 тенкĕ те 35 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство, кантурĕ—0-23.

НТ 01392 Типографи № 1 Чăвашполиграфиздата Тираж 20.000 экз.